Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ОКТАБӖР 16 ВЫРСАРНИКУН 239(5052) №

Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухат | ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ | Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 5—67, ред. заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн—4—40, парти пурнӑҫ пайӗн—6—88, йалхуҫалӑх пайӗн—4—97, советсен пайӗн—6—88, промышленнӑҫ пайӗн—7—97, йалкорсен пайӗн—2—30, дежурнӑйӗн—6—23.

Тӑваттӑмӗш квартӑл планне срукчен тултарассишӗн

Совет ҫӗршывӗ хӑйӗн аслӑ праҫникне — Октабӗр революцийӗ пулнӑранпа 21 ҫул тултарнӑ куна уйавлама хатӗрленет. Пур ҫӗрте те уйава пысӑк парнесемпе, производствӑ ӗҫӗнче ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тунипе кӗтсе илесшӗн ӑмӑртаҫҫӗ. Октабӗр уйавӗ умӗнхи ӑмӑрту промышленнӑҫра та, йалхуҫалӑхӗнче те, транспӑртра та сарӑлсах пырат. Ҫак ӑмӑртӑва республикӑри финанспа банк работникӗсем те хутшӑнчӗҫ.

Финанс работникӗсем Октабӗр уйавне хатӗрленнӗ май, ӑмӑртса ӗҫлесе пырса, ҫӗре пысӑк ҫитӗнӳсем тума татӑклӑ обйазательствӑсем илчӗҫ.

Ҫентабӗр уйӑхӗнче „Чӑваш Коммунӗ" хаҫатра РСФСР Финанс Халӑх Комиссарийачӗ ҫумӗнче пулнӑ финагентсемпе инспектӑрсен канашлӑвӗ ҫӗнсе каланине пичетлесе кӑларнӑччӗ. Вӑл ҫӗнӗве сӳтсе йавнӑ хыҫҫӑн, чылай вырӑнсенче финанс работникӗсем хӑйсен ӗҫне аванлатни палӑрчӗ. Республикӑра финанс планне тултарас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлекен йалсоветсен, районсен йышӗ хутшӑнсах пырат. Пӗтӗмӗшпе илсен, пирӗн республикӑри финанс работникӗсем виҫҫӗмӗш кварталра иртнӗ кварталсенчен аванрах ӗҫлесе пычӗҫ. Трак, Шӑнкӑртам, Тӑвай, Кувакинӑ районӗсем виҫҫӗмӗш квартал планне пуринчен малтан, паха кӑтартусемпе ӑнӑҫлӑн тултарчӗҫ. Вӗсен ӳсӗмӗсем кулленех социалисӑмлӑ ӗҫ меслечӗсемпе ӗҫленипе, финанс активӗпе тачӑ ҫыхӑнса тӑнипе пулнӑ.

Государствӑ тупӑшӗ йенӗпе республикӑ III-мӗш квартал планне ытлашшипех — 10[illegible],9 процент тултарчӗ. Ҫирӗмпӗр район II-мӗш квартал планне государствӑ тупӑш йенӗпе чылай ирттерсе тултарнӑ.

Чылай районсем „Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх (пӗрремӗш ҫулхи кӑларӑм) Займ" укҫине пухас ӗҫе паха йӗркеленӗ. Займ укҫине пухас тӗлӗшпе III-мӗш квартал планне Шӑнкӑртам районӗ 257,6 проц., Тугаркас—153, Йелчӗк—143, Кувакинӑ—127, Тӑвай—120 процент тултарнӑ.

Социалисӑмлӑ ӑмӑрту, активпа лайӑх ӗҫлени, халӑх хушшинче массӑлла ӑнлантарулӑ ӗҫе тивӗҫлипе йӗркелени — акӑ мӗн пулӑшат пур ӗҫре те ӑнӑҫлӑх тума.

Йӗпреҫри поҫолкӑ совечӗ чылай ҫулсем хушши пур ӗҫсем тӑрӑх та кайа йулса пынӑ. Массӑпа тачӑ ҫыхӑнса ӗҫленипе, политикӑлла-массӑлӑ ӗҫе вӑйлатнипе, секцисен ӗҫне йӗркеленипе йулашки вӑхӑтра поҫолкӑ совечӗ хӑйӗн ӗҫне аванлатма пуҫларчӗ. Вӑл пур ӗҫсемпе те районра мала туха пуҫларӗ. Финанс ӗҫӗпе поҫолкӑ совечӗ райӗҫтӑвкомӑн кусса ҫӳрекен хӗрлӗ йалавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Поҫолкӑ совечӗн ҫирӗп актив пур: СССР, РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйланӑ вӑхӑтри агитатӑрсем, секци членӗсем, килхуҫи хӗрарӑмӗсем поҫолкӑ советне пулӑшса пыраҫҫӗ. Вӗсем пӗр-пӗринпе социалисӑмлӑ ӑмӑрту договӑрсем тунӑ. Тӗрӗс калат поҫолкӑ совет председателӗ Лешчов йулташ:

— Актив кирлӗ, актива ӗҫе хутшӑнтарас пулат, унсӑрӑн ӗҫ тухмаст.

Ҫӑвӑн пекех Пӑвакас йалсовечӗ те (Вӑрмар р.) III-мӗш кварталта укҫа-тенкӗ пухас плана аван тултарнӑшӑн райӗҫтӑвкомӑн кусса ҫӳрекен хӗрлӗ йалавне илнӗ. Кун хыҫҫӑн йалсовет татах хастарлӑраххӑн ӗҫлеме тытӑнчӗ. Государствӑ умӗнчи пур парӑмсене те, укҫа-тенкӗ пухас ӗҫӗн ҫулталӑк планне вӑхӑтчен малтан тултарас тӗлӗшпе халӗ йалсовечӗ Октабӗр уйавӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнчӗ. Нойабӗрӗн 7-мӗш тӗлне IV-мӗш кварталти финанс планне 75 процент, декабӗрӗн 15-мӗшне—100 процент тултарма пулчӗ. Обйазательствӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласшӑн пӗтӗм актив хӗрӳлӗн ӗҫлет.

Халиччен чылай йалсоветсем укҫа-тенкӗ пухас ӗҫрен айакра тӑма тӑрӑшни палӑрнӑ. Йалсоветсем нумайӗшӗ финанс ӗҫне налог агенчӗсем туса пырасси ҫине шаннӑ. Ҫак ҫитменлӗхе чылай йалсоветсем халӗ пӗтерсе пыраҫҫӗ. Анчах ку тӗлӗшпе ӗҫлемели нумай-ха.

Чӑваш республикӗнче финанс ӗҫӗ халӗ те кайа йулса пырат. Республикӑ III-мӗш кварталри финанс планне мӗн пурӗ те 79,8 процент ҫеҫ тултарчӗ.

IV-мӗш квартала кӗнӗренпе ҫур уйӑх иртрӗ ӗнтӗ. Тӳрех каламала: укҫа-тенкӗ пухас хӑвӑртлӑх IV-мӗш кварталра та пачах ҫителӗксӗр. Октабӗрӗн 11-мӗш тӗлне республикӑ IV-мӗш квартал планне мӗн пурӗ те 5,2 процент ҫеҫ тултарнӑ. IV-мӗш кварталра та халиччен йулса пынӑ районсемех: Турхан, Канаш, Ҫӗмӗрле, Йӗпреҫ районӗсем начар ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак районсенче шыраса илмен парӑмсем, уйрӑмӑнах йединоличниксенчен илмели парӑмсем пысӑк.

Пур районсен те малта пыракан районсем пек ӗҫлеме кирлӗ условисем пурте пур. Паха опытсене кайа йулса пыракан районсене, йалсоветсене анлӑн кусарса пырас пулат. Октабӗр уйавне хатӗрленнӗ май, финанс органӗсем, финанс работникӗсем хушшинче социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва, массӑлӑ ӗҫе анлӑнрах сарни, финанс активӗпе ӗҫлени, финанс секцисене вӑйлатни кирлӗ. Районсенче, республикӑри финанс органӗсенче сӑтӑрла ӗҫсен йулашкийӗсене пӗтересси ҫаплах вӑраххӑн пулса пырат-ха. Партипе совет организацийӗсен финанс органӗсене сӑтӑрла ӗҫсен йулашкийӗсене татӑклӑн пӗтерсе пыма, финанс аппарачӗсенче пытанса йулнӑ тӑшмансенчен тасатма тивӗҫлипе пулӑшмала.

ПСК(б)П Чӗваш облӑҫ организацин XIX-мӗш конференцийӗ йышӑннӑ резоԓуцинче ҫапла каланӑ:

„Конференци Обкома, Халӑх Комиссарӗсен Советне, Финанс Халӑх Комиссариатне, парти райкомӗсене тата райӗҫтӑвкомсене республикӑ финанс планне тултарас ӗҫре кайа йулса пынине чи кӗске срукра пӗтерме, финанс органӗсен тата Госбанк системин ӗҫ пахалӑхне ӳстерме хушат",—тенӗ.

Партипе совет организацисен ответлӑ ӗҫӗ вӑл—ҫак директивӑна кӗске вӑхӑтрах пурнӑҫа кӗртесси пулат.

IV-мӗш квартал—1938 ҫулхи финанс планне тултарассинчи пӗтӗм ӗҫе татса паракан квартал. Партипе совет, хуҫалӑх тата финанс органӗсен бӳджет ҫулне тупӑш тата расход йенӗпе пӗтӗмӗшпех тултарассишӗн боԓшевикла хастарлӑхпа ӗҫлемеле.

Амур ҫинчи Комсомоԓскпа радиотелефон тӑрӑх ҫыхӑнса калаҫнӑ

Октабӗрӗн 14-мӗшӗнче, ССР Союзӗн тӗп телеграф радиоаппаратӗнчен, Мускавпа Амур ҫинчи Комсомоԓск хушшинче радиотелефонпа ҫыхӑнса черетлӗ калаҫу пулса иртнӗ.

Мускавра радиоаппарат пӳлӗмне Валентинӑ Гризодубӑвӑн ашшӗпе амӑшӗ, ывӑлӗ тата Маринӑ Раскован пиччӗшӗ пынӑ.

Оборонӑ промышленнӑҫ Халӑх Комиссарӗ М. М. Каганович йулташ „Родина" самоԓот командирӗнчен — Гризодубӑвӑ йулташран екипаж сывлӑхӗ ҫинчен ыйтса пӗлнӗ хыҫҫӑн, телефон умне Гризодубӑвӑн упӑшки — капитан В. А. Соколов пырат.

Унтан Гризодубӑвӑ йулташпа унӑн амӑшӗ — Надеждӑ Андрейӗвнӑ тата ашшӗ — Степан Васильйӗвич калаҫаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен хӗрӗн тата унӑн мухтавлӑ йулташӗсен сывлӑхӗсем ҫинчен ыйтса пӗлеҫҫӗ.

Валентинӑ Гризодубӑвӑ йулташ ҫапла ответленӗ:

— Епӗр пурте сывах. Хаԓ пурте сывалса тӳрленсе пыратпӑр.

Раскован амӑшӗ — Аннӑ Спиридонӑвнӑ Малинина тата хӗрачи Таԓӑ Мускав хулин Советский районӗнчи 138-мӗш шкултан каласнӑ, вӑл шкулта „Родина" самоԓотӑн паттӑр штурманӑн хӗрӗ вӗренет.

Расковӑ йулташ ҫапла каланӑ:

— Сывлӑх тӗлӗшӗнчен хаԓ аван туйатӑп. Пайан туйасӑр ҫӳреме тытӑнтӑм. Ыран Хабаровска тухса кайатпӑр, унта пӑртак пуранна хыҫҫӑн, Мускава пыма тухатпӑр. Часах килте пулатпӑр...

Амур ҫинчи Комсомоԓскпа радиоделефон тӑрӑх ҫыхӑнса пулнӑ калаҫу пӗр сехет ытла пынӑ.

(ТАСС).

РСФСР Вырӑнти промышленнӑҫ Халӑх Комиссариатӗнчи канашлу

Куллен кирлӗ таварсем туса кӑларасси ҫинчен

Октабӗрӗн 14-мӗшӗнче Мускавра РСФСР Вырӑнти промышленнӑҫ Халӑх Комиссариачӗн куллен кирлӗ таварсем туса кӑларакан савӑчӗсенчи стахановӗцсемпе хуҫалӑх работникӗсен канашлӑвӗ хупӑннӑ. Канашлу икӗ кун хушши ӗҫленӗ.

Вырӑнти промышленнӑҫ предприйатийӗсенчен нумайӗшӗ виҫҫӗмӗш квартал программине тултарайман. Канашлура ҫакӑ палӑрнӑ: вырӑнти промышленнӑҫ предприйатисен аллинче куллен кирлӗ таварсем тата ытларах туса кӑларма пит пысӑк резервсем пур, анчах ӗҫ хатӗрӗсемпе туллин усӑ курмаҫҫӗ, брак пит пысӑк, чӗртаварсемпе кирлӗ пек усӑ курмаҫҫӗ. Савӑтсенче шалти йӗркесӗрлӗхсене хирӗҫ, ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетессишӗн кӗрешмеҫҫӗ.

Канашлу отрӑҫӗллӗ секцисем 7 уйарса хунӑ. Вӑл секцисем куллен кирлӗ таварсем ытларах кӑларас тӗлӗшпе, продукци пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе тумали практикӑлӑ ӗҫсем палӑртса хураҫҫӗ.

Канашлу ӗҫӗсене РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗн заместителӗ Вахрушӗв йулташ, РСФСР Госплан председателӗ Чадайӗв йулташ тата РСФСР Сутуилӳ Халӑх Комиссарӗ Ԓубимӑв йулташ хутшӑнса ӗҫленӗ.

(ТАСС).

Чехословакири лару-тӑру

Поԓшӑн Чехословаки Силезинчи террорла ӗҫӗсем

Нойабӗрӗн 1-мӗш тӗлне 10 пин Чехословаки граждӑнне Чехословаки Силезийӗнчен кӑларса йарасси ҫинчен панӑ приказ хыҫҫӑн, Поԓшӑ влаҫӗ тата темиҫе распорйажени кӑларнӑ. Вӑл распорйаженисем чехсен граждӑнла прависене пӗтӗмпех пӗтерсе хураҫҫӗ. Шкулсенче пуринче те Поԓшӑ чӗлхипе ҫеҫ вӗрентмеле тунӑ. Чехословакин шкулӗсене пурне те хупаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех граждӑнлӑ муниципалитетсене (вырӑнти самоуправлени органӗ) тата йалсенче халӑхсем суйласа лартнӑ общинӑсен совечӗсене салатса йанӑ. Вӗсен вырӑнне Поԓшӑ чиновникӗсене лартаҫҫӗ.

(ТАСС).

Чехословакири реакцилӗ пичет йӑпӑлтатат

ПРАГӐ, октабӗрӗн 13-мӗш. Правителствӑ коалицинчи реакцилӗ партисем политикӑлӑ партисене салатса йарассишӗн йе вӗсене хӑйсене хӑйсем саланса каймала тӑвассишӗн ҫине тӑраҫҫӗ. Фашисла ушкӑнсем коммунисла партине хирӗҫ урса кайсах ӗҫлеҫҫӗ, ӑна кӗске вӑхӑтрах салатса йама ыйтаҫҫӗ. Аграрлӑ парти хаҫачӗсем „Венков", „Вечор", фашисла хаҫатсем—„Експресс", „Поледни лист" тата консерватӑрсен „Народни политика" хаҫачӗ правителствӑран коммунисла парти ӗҫӗсене чарса лартма ыйтаҫҫӗ.

(ТАСС).

Германи Чехословаки умне лартнӑ требованисем

Чехословакин йут ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Хвалковский Германин фашисла правителствипе калаҫма Мӳнхӗне пынӑ. Германи правителстви Хвалковскине Чехословакинчи Гитлӗра хирӗҫле партисен, чи пирвайах коммуниссен тата социал-демократсен партисен ӗҫне, ҫавӑн пекех тата фашиссене хирӗҫле хаҫатсемпе литературӑсем кӑларассине чарса лартма хушнӑ.

(ТАСС).

Германи фашисӗсем Чехословакире хуҫаланаҫҫӗ

Октабӗрӗн 9-мӗшӗнче Германи ҫарӗсем Полиичка хулине (ҫурҫӗр Моравӗ) хӑйсен ирӗкӗпе туртса илни ҫинчен пӗлтернӗччӗ. Чехословаки правителстви ҫине тӑрсах протест панӑ хыҫҫӑн, Германи командованийӗ хулан пӗр пайне ҫарсенчен тасатнӑ, вара хула центрӗ витӗр тухакан ҫӗнӗ чикӗ туса хунӑ. Германи ҫарӗсем хулан чи паха районӗсене туртса илнӗ, вӑл шутра: тӗп учреждениcене тата тар тӑвакан пысӑк савӑта туртса илнӗ.

(ТАСС).

Лондӑнри чукунҫул рабочийӗсен забастовки

Октабӗрӗн 10-мӗшӗнче Лондӑн узӗлӗнчи икӗ чукунҫул станцинчи рабочисем забастовкӑ пуҫланӑ. Чукунҫул рабочийӗсен нацилӗ союзӗн профсойуз чиновникӗсем вӑл забастовка йышӑнман. Апла пулсан та, рабочисем забастовкӑ тума пӑрахман. Октабӗрӗн 12-мӗшӗнче чукунҫул рабочийӗсем татах 2.600 ҫын забастовка хутшӑннӑ.

Ҫав кунах Лондӑнри чи пысӑк рынӑксенчен пӗринче ӗҫлекен грузчиксем, хӑйсем забастовкӑ тӑвакансемпе пӗр шухӑшлӑ пулнине кӑтартса, чукунҫулпа пыракан аш-какай продуктисене пушатма пӑрахнӑ. Вӑл продуктӑсене служӑшчисем тата штрейкбрехӗрсем пушатнӑ.

Чукунҫул компанин хуҫисем ӗҫе тытӑнма ыйтаҫҫӗ, ӗҫлеме пуҫламасан забастовкӑ тӑвакан рабочисене пурне те ӗҫрен кӑларса йарассипе хӑратаҫҫӗ.

(ТАСС).

Хасан кӳлли патӗнчи ҫапӑҫусен участникӗ ԓотчик лейтенант Николай Иванӑвич Лысикӑв Мускава ҫитнӗ. Лысикӑв йулташ Ленин йачӗпе тӑракан Ҫар-Политикӑлӑ академине вӗренме кӗрет.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Н. И. Лысикӑв.

А. Иоселевич фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото).

ССР Союзӗн Лондӑнри полпречӗн Майский йулташӑн протесӗ

Октабӗрӗн 11-мӗшӗнче ССР Союзӗн Лондӑнри полпречӗ Майский йулташ Англин йут ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Галифакс патӗнче пулнӑ, вӑл лорд Уинтертон хӑйӗн Шоргемра каланӑ сӑмахӗнче суйа хыпарсем сарнине хирӗҫ протест панӑ.

(ТАСС).

Совет Союзӗн Лондӑнри полпредстви пӗлтерни

Авиаци министерствин парламӗнт секретарӗн лорд Уинтертонӑн Шоргемра каланӑ сӑмахӗ пирки ССР Союзӗн Лондӑнри полпредстви октабӗрӗн 11-мӗшӗнче ҫапла каласа пӗлтерне: „Англи пичечӗ пӗлтерн тӑрӑх, лорд Уинтертон хӑйӗн сӑмахӗнче ҫапла каланӑ: Чехословакири кризис вӑхӑтӗнче Совет Союзӗ пулӑшу паман имӗш. Совет Союзӗ, хӑйӗн ҫарӗ йӑваш пулнине кура, тӗтрелӗ шухӑшлӑ сӑмахсем панипе кӑна чарӑнса тӑнӑ имӗш.

Уинтертонӑн ҫак сӑмахӗсем Совет правителстви Чехословаки ыйтӑвӗнче ӑннипе мӗнле позици йышӑнса тӑнине йӑлтах пӑсса ӑнлантараҫҫӗ. Ку ыйтура ССР Союзӗн позицийӗ тӗллӗ те паллӑ пулнӑ, вӑл ыйтура паллӑ марри нимӗн те пулма пултараймаст; ҫентабӗрӗн 21-мӗшӗнче Женевӑра Йут ҫӗршыв ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ М. М. Литвинӑв хӑй Лигӑ наци пленумӗнче тухса каланӑ вӑхӑтра вӑл позици мӗнлине тӗллӗн те уҫҫӑн каласа панӑ. Литвинӑв йулташ хӑй сӑмахӗнче, хӑй 1938 ҫулти ҫентабӗрӗн 2-мӗшӗнче Мускавра Франци ӗҫӗсен Мускаври поверенныйӗпе калаҫнин тӗп шухӑшӗсене илсе, ҫапла каланӑ: ССР Союзӗ Совет Союзӗпе Чехословаки хушшинчи пактран тухса тӑракан обйазателствӑсене пурнӑҫа кӗртме, Францие пӗрле, пӗтӗм май килекен ҫулсемпе усӑ курса, Чехословакине кирлӗ пек пулӑшу пама хатӗр тӑрат, тенӗ.

Литвинӑв малала ҫапла каланӑ: ССР Союзӗн ҫар ведӑмстви, пӗрле тумали ӗҫсем ваԓԓи конкретлӑ мероприйатисем палӑртса хума, Франципе Чехословакин генераԓнӑй штабӗсен представителӗсемпе кӗске вӑхӑтрах калаҫусем пуҫлама хатӗр тӑрат", тенӗ.

(ТАСС).

Испанири троцкисла шпионсен ӗҫӗ пирки пыракан процесс

ПОУМ текен троцкисла организаци ӗҫӗ пирки пыракан процесра (Барҫелонӑра), октабӗрӗн 12-мӗшпе 13-мӗшсӗнче суд айӑпланакансене допрос тунӑ. Ҫак троцкисла-шпионла бандӑ пуҫлӑхӗсен ирсӗр преступленийӗсем пӗрин хыҫҫӑн тепри уҫӑлса пыраҫҫӗ. Айӑпланакан Хулиан Горкин—ПОУМ-ӑн тӗп организатӑрӗсенчен пӗри, ҫав шпионсен йӑвине мӗн пуҫланнӑранпах йертсе пынӑ ҫын. Фактсемпе тата документсемпе тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ хыҫҫӑн, Горкинӑн ҫакна ирӗксӗрех йышӑнмала пулса тӑрат: 1937 ҫулти май уйӑхӗнче Каталонире республикӑ правителствине хирӗҫ, халӑх фронтне хирӗҫ путч ҫӗклеме хӑтланса пӑхнӑ, вӑл путча троцкисла организаци (ПОУМ) хатӗрленӗ тата йертсе пынӑ. Айӑпланакан ҫавӑн пекех тата ҫакна йышӑннӑ: Испани республикӗн тылӗнче хӑйӗн преступленилӗ, ишӗлтерӳлӗ ӗҫӗсене туса пырас ӗҫре ПОУМ „йут ҫӗршывсенчи фондсенчен" паракан пулӑшусемпе усӑ курнӑ.

Горкин хыҫҫӑн суд айӑпланакан Андрадепе Аркера допрос тунӑ, вӗсем те ПОУМ-ӑн паллӑ пуҫлӑхӗсем. Вӗсене допрос туса, суд троцкисла-фашисла бандӑ хӑй аллинче пулнӑ пит нумай укҫа-тенкӗсене ӑҫтан илсе тӑнине тӗпчен палӑртат. Ҫавӑн пекех тата допрос туса, суд ПОУМ-ӑн Мадридри шайки айӑпланакан Андраде урлӑ Италипе Германи фашисӗсемпе ҫыхӑнса тӑнине палӑртат. Суд айӑпланакан Аркер ҫырнӑ документсене вуласа парат, вӑл документсем ПОУМ руководствин шпионла тата провокацилӗ ӗҫӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑлараҫҫӗ.

(ТАСС).

Гектартан 72 центнӗр ҫӗрмамӑк

Узбек СС Республикӗнчи колхозсенче тырпул пухса илес ӗҫре Октабӗр праҫникӗ умӗнхи социалисӑмла ӑмӑрту анлӑн сарӑлса кайнӑ. Узбек ССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Тохта Курбанӑвӑ йулташӑн звени (Бухара районӗнчи «Кзылтрактӑр» колхоз) кашни гектар ҫинчен 72-шер центнӗр ҫӗрмамӑк пухса илсе государствӑна панӑ, гектар пуҫне 100-шер центнӗртан кайа мар пухса илме сӑмах панӑ.

Ходжи-Абад районӗнчи Буденный йачӗпе тӑракан колхоз заготовкӑсен ҫулталӑк планне тултарнӑ. Стахановӗцсем ҫӗрмамӑк пухас ӗҫри хӑвӑртлӑхсене чакармаҫҫӗ. Вӗсем Октабӗр праҫникӗ тӗлне пӗтӗм ҫӗрмамӑкне пухса илме, ҫӗршыва кашни гектартан 8-шар центнӗр ытларах (планран ирттерсе) ҫӗрмамӑк пама пулнӑ.

(ТАСС).

Пӗр мӗлйун тенкӗ преми-надбавкӑ

Андижан районӗнчи нумай колхозсем планран ирттерсе панӑ ҫӗрмамӑкшӑн пысӑк преми-надбавкӑ илеҫҫӗ. Карл Маркс йачӗпе тӑракан колхоза пӗр мӗлйун тенкӗ панӑ. Вӑл колхоз председателӗ—Узбек ССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Иргаш Кабилӑв.

(ТАСС).

Интернационаллӑ бригадӑ бойецӗсем патне йанӑ ҫыру

Испанири халӑх фрончӗн национаԓнӑй комитечӗ республикӑ ҫарӗнчен хӑтарнӑ интернационаллӑ бригадӑри бойецсем патне ҫакӑн пек ҫыру йанӑ: „Йут ҫӗршывсен бригадинчи доброволӗцсене, тенӗ ҫыруранра — испанӗцсем ӗмӗр манас ҫук. Есӗр, тӗрлӗ ҫӗршывсенчен килнӗ доброволӗцсем, пирӗнпе пӗр ӗмӗтлӗ пулса кӗрешрӗр. Есӗр Испани халӑхӗн демократине тата унӑн никама пӑхӑнса тӑрасмарлӑхне сыхласа хӑварассишӗн кӗрешрӗр. Есӗр пирӗн ҫӗршывран тухса кайнӑ вӑхӑтра епӗр сире ҫакӑн ҫинчен шантаратпӑр: Испанири халӑх фрончӗ икӗ ҫул хушши сирӗнпе пӗрле кӗрешнӗ ӗҫсене хӳтлесе тата ҫӑлса хӑварма пултарат".

(ТАСС).

Австри емигранчӗсене Беԓгиреn кӑларса йараҫҫӗ

Беԓгири полици Австрирен тарса пынӑ ҫынсене Германийе кӑларса йарат. Кунсеренех вуншар емиграна арӗслесе чикӗ хӗррипчи пункта илсе пыраҫҫӗ. Унта вӗсене вакунсем ҫине лартса Германири Ахаен йатлӑ хулана ӑсатаҫҫӗ, унта вӗсене Гестапо (Германири вӑрттӑн полици) аллине параҫҫӗ.

(ТАСС).

Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (боЉшевиксен) Партин ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ. КĔСКЕ КУРС. ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.

III СЫПĂК

МЕЊШЕВИКСЕМПЕ БОЉШЕВИКСЕМ РОÇÇИЙĂПА ЙАПОНИ ХУШШИНЧИ ВĂРÇĂПА ВЫРĂССЕН ПĔРРЕМĔШ РЕВОЉУЦИЛĔ ТАПХĂРĔНЧЕ.

(1904—1907 ÇУЛСЕМ).

1. Роççийăпа Йапони хушшинчи вăрçă. Роççийăра револуцилĕ йухăм малала çĕкленсе пыни. Петербургри забастовкăсем. Рабочисен Зимний дворец умĕнче пулнă 1905 çулти йанварĕн 9-мĕшĕнчи демонстрацийĕ. Демонстрацине персе салатни. Революци пуçланни.

XIX-мĕш ĕмĕр вĕçĕнчен пуçласа империалисăмлă государствăсем Тихий океанра пуç пулса тăрассишĕн, Китайа пайлассишĕн вăйлă кĕрешӳ пуçласа йанă. Çак кĕрешĕве патша Роççийĕ те хутшăннă. 1900 çулта патша çарĕсем Йапони, Германи, Англи тата Франци çарĕсемпе пĕрле нихçан пулман хайарлăхпа, Китайри хăйĕн çивĕчлĕхĕпе йут çĕршывĕсен империалисĕсене хирĕç пыракан халăх восстанине путарса лартнă. Унччен маларах патша правитĕлстви Китайа ирĕксĕрех Роççийă аллине Љаодун çурмаутравне партарнă, унта Порт-Артур крепăç пулнă. Роççийă Китай территори çинче чукунçулсем тума права илнĕ. Çурçĕр Манчжурире чукунçул—Хĕвелтухăç Китайри чукунçула (КВЖД) тунă, ăна сыхлама вырăс çарĕсене кĕртсе йанă. Патша Роççийĕ Çурçĕр Манчжурине вăрçăпа кĕрсе йышăнса илнĕ. Патша влаçĕ Корейа патнелле çывхарса пынă. Вырăс буржуазийĕ Манчжурире „Желтороççийă" туса хума плансем тунă.

Инçет-Хĕвелтухăçĕнче йут çĕрсене туртса илнĕ çĕрте патша йĕрки хăй пек тепĕр тискер кайăк çине—Йапони çине пырса перĕннĕ; Йапони хăвăрт империалисла çĕршыв пулса тăнă, вăл та Ази материкĕ çинче, чăн малтан Китай шучĕпе, йут çĕрсене туртса илме тăрăшнă. Йапони те, патша Роççийĕ пекех, хăй аллине Корейăпа Манчжурине çавăрса илме тăрăшнă. Йапони унчухнех те ĕнтĕ Сахалина тата Инçет-Хĕвелтухăçне туртса илме ĕмĕтленнĕ. Роççийă Инçет-Хĕвелтухăçĕнче вăйланассинчен хăраса тăнă Англи ăшра Йапони майлă пулнă: Роççийăпа Йапони хушшинчи вăрçă çывхарса пынă. Çак вăрçă патне патша правитĕлствине çĕнĕ рынăксем шыракан шултра буржуази тата помещиксен чи реакцилĕ сийĕсем тĕртсе тăнă.

Патша правитĕлстви вăрçă çинчен пĕлтерессе кĕтсе илеччен, Йапони хăй малтан вăл вăрçа пуçласа йанă. Роççийăра лайăх разведкăсем тытса тăрса Йапони ку вăрçăра хатĕрленсе çитмен тăшманпа тĕл пулма шутланă. Вăрçă пуçлассинчен пĕлтермесĕрех 1904 çулти йанварте Йапони кĕтмен çĕртен вырăссен Порт-Артур крепăçĕ çине тапăннă та Порт-Артурта тăракан вырăссен флотне пысăк çухатусем кӳнĕ.

Çапла пуçланнă Роççийăпа Йапони хушшинчи вăрçă.

Патша правитĕлстви вăрçă ăна хăйĕн политикилă лару-тăруне çирĕплетме тата революцине чарса лартма пулăшĕ, тесе шутланă. Анчах ĕçсем вăл шутланă пек пулман. Вăрçă патша йĕркине тата та ытларах хавшатнă.

Роççийăн начар хĕçпăшаллантарнă, начар вĕрентсе хатĕрленĕ, пултарусăр тата сутăнчăк генералсем йертсе пынă çарĕ поражени хыççăн поражени тӳсме пуçланă.

Вăрçăпа усă курса капиталиссем, чиновниксем, генералсем пуйса пынă. Пур çĕрте те вăрласси йышăланса пынă. Çарсене кирлĕ хатĕрсем начар тăратнă. Снарйадсем çитмен чухне, кулса панă пек, патша çарĕсем вагонĕ-вагонĕпе турăшсем илнĕ. Салтаксем тарăхса çапла каланă: „йапонĕцсем пире снарйадсемпе, епĕр вĕсене—турăшсемпе". Аманнă çынсене турттарас вырăнне, уйрăм пуйăссем патша генералĕсем çаратса тупнă пурлăхĕсене турттарнă.

Йапонĕцсем Порт-Артур крепăçне малтан хупăрласа тăнă, кайран туртса илнĕ. Патша çарне темиçе хутчен парăнтарса, вĕсем ăна Мукден патĕнче çĕмĕрсе тăкнă. Патшан виççĕрпинлĕ çарĕ ку çапăçура, вилнисене, аманнисене, тыткăна лекнисене пĕрле илсен, 120 пин çын çухатнă. Кун хыççăн тата, хупăрласа илнĕ Порт-Артура пулăшма Балти тинĕсĕнчен йанă патша флотне Цусимă проливĕнче пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă, пĕтерсе хунă. Цусимă патĕнче парăнни пĕтĕмпех катастрофă пулнине пĕлтернĕ: патша йанă 20 çар карапĕнчен, 13 карапне шыва путарнă. 4 карапне тыткăна илнĕ. Патша Роççийĕ вăрçăра пĕтĕмĕшпех парăннă.

Патша правитĕлствин ирĕксĕрех Йапонипе мăшкăллă мир тумала пулнă. Йапони Корейăна йарса илнĕ, Роççийăран Порт-Артура тата Сахалинăн çуррине туртса илнĕ.

Халăх массисем çак вăрçа тăвасшăн пулман, вăл Роççийăшăн сийенлĕ пулнине ăнланнă. Патша Роççийĕ кайа йулнишĕн халăхăн хаклă тӳлемеле пулнă.

БоЉшевиксем тата меЊшевиксем ку вăрçă çине тĕрлĕрен пăхнă.

МеЊшевиксем, çав шутрах Троцкий, оборончествă позицийĕ çине, урăхла каласан, патшан, помещиксемпе капиталиссен „тăван çĕршывне" сыхлас позици çине кайса ӳкнĕ.

Ленин тата боЉшевиксем пачах урăхла шутланă: ку çаратулă вăрçăра патша правитĕлстви парăнни усăллă, мĕншĕн тесен вăл патша йĕрки вăйсăрланасси тата революци вăйланасси патне илсе пырать, тенĕ.

Патша çарĕсем парăнни халăхăн чи сарлака массисем умĕнче патша йĕркин çĕрĕклĕхне уçса кăтартнă. Халăх массисем патша йĕркине курайманни кашни кунах ӳснĕ. Порт-Артур пĕтни—самодержави пĕтме пуçлани, тесе çырнă Ленин.

Патша революцине вăрçăпа пăвса лартасшăн пулнă. Анчах ĕç тепĕр майлă çавăрăнса тăнă. Роççийăпа Йапони хушшинчи вăрçă революцине хăвăртлатнă.

Патша Роççийĕнче капиталисла пусмăр патша йĕркин пусмăрĕпе вăйланса пынă. Рабочисем капиталиссен експлуатацинчен, катăргăри пек ĕçрен кăна мар, тата пĕтĕм халăх правасăр пулнинчен те хĕн курнă. Çавăнпа та ăнланулă рабочисем хуласемпе йалсенчи пĕтĕм демократилĕ елементсен патша йĕркине хирĕç пыракан революцилĕ йухăмне йертсе пыма тăрăшнă. Хресченсем çĕр çуккипе, крепостничĕствăн нумай хисеплĕ йулашкисемпе асапланнă, вĕсем помещикпе кулак пусмăрĕнче хĕнхур курса пурăннă. Патша Роççийĕнче пурăннă халăхсем икĕ пусмăр айĕнче—хăйсен харпăрхăй помещикĕсемпе капиталисĕсен тата вырăс помещикĕсемпе капиталисĕсен пусмăрĕ айĕнче асап тӳссе пурăннă. 1900—1903 çулсенчи економикăлă кризис ĕççынни массисен чухăнлăхне вăйлатнă, вăрçă ăна тата та ытларах çивĕчлетнĕ. Вăрçăра парăнни массăсем патша йĕркине курайманнине вăйлатнă. Халăх чăтамлăхĕн вĕçĕ çывхарса пынă.

Çапла ĕнтĕ, революци тума сăлтавсем кирлинчен те ытларах пулнă.

1904 çулти декабĕрте, боЉшевиксен Бакури комитечĕ йертсе пынипе, Бакури рабочисем питĕ пысăк лайăх организациленĕ стачкă туса иртернĕ. Çав стачкă рабочисем çĕнтернипе, Роççийăри рабочисен йухăмĕн историнче рабочисемпе нефть промышлĕнникĕсем хушшинче пирвайхи коллективлă договăра тунипе, вĕçленнĕ.

Бакури стачкă Закавказйĕре тата Роççийăн чылай районĕсенче революци çĕкленессин пуçламăшĕ пулса тăнă.

> „Бакури стачкă йанварпе февраЉ уйăхĕсенче Пĕтĕм Роççийĕпе пулса иртнĕ мухтавлă выступленисен сигналĕ пулчĕ" **(Сталин).**

Çак стачкă аслă революцилĕ тăвăл умĕнхи аслати çиçĕмĕ йевĕрлĕ пулнă.

Революцилĕ тăвăлăн пуçламăшĕ Петербургра 1905 çулти йанварĕн 9 (22)-мĕшĕнче пулса иртнĕ ĕçсем пулса тăнă.

1905 çулти йанварĕн 3-мĕшĕнче Петербургри чи пысăк савăтра—Путиловский (халĕ Кировский) савăтра стачкă пуçланнă. Çав стачкă 4 рабочине савăтран кăларса йанă пирки пуçланса кайнă. Путиловский савăтри стачкă хăвăрт ӳссе сарăлнă, ун çумне Петербургри ытти хапрăксемпе савăтсем хутшăннă. Стачкă пĕтĕм рабочисен стачки пулса кайнă. Йухăм хăрушшăн ӳснĕ. Патша правитĕлстви çак йухăма пуçламĕшĕнчех путарса лартма йышăннă.

1904 çултах, Путиловский савăтри стачкăччĕнех, провокатăр Гапон поп пулăшнипе полици рабочисем хушшинче хăйĕн „Собрание русских фабрично-заводских рабочих" йатлă организацине тунă. Çав организацин Петербургри пур районсенче те хăйĕн отделенийĕсем пулнă. Стачкă пуçлансан, Гапон поп хăйĕн обшчĕствин пухăвĕсенче çакнашкал провокатăрла план сĕннĕ: йанварĕн 9-мĕшĕнче пур рабочисем те пухăнччăр та, турăшсемпе, патша портречĕсемпе Зимний дворец патне мирлĕн пырса хăйсен нушисем çинчен патшана петици (ыйту) паччăр. Патша халăх патне тухать те, ăна итлет, вăл мĕн ыйтнине ĕçе кĕртет пулать. Гапон патша охранкине пулăшма: рабочисене персе пăрахмала тума тата рабочисен йухăмне йун ăшне путармала тума тытăннă. Анчах полицисен планĕ патша правитĕлствине хирĕç çавăрăнса тăнă.

Петицине рабочисен пухăвĕсенче сӳтсе-йавнă, унта хушусемпе улшăнусем кĕртнĕ. Вăл пухусенче боЉшевиксем те, хăйсене боЉшевиксем тесе уççăн каламасăр, тухса каланă. Вĕсен влийанийĕпе петицине пичетпе сăмах ирĕклĕхĕ, рабочи сойузсен ирĕклĕхĕ çинчен ыйтнисене, Роççийăри государствă стройне улăштарма Учредитĕлнăй собранине пухма, саккун умĕнче пурте пĕр тан пулмала тума, чиркĕве государствăран уйăрма, вăрçă чарса лартма, 8 сехетлĕ ĕç кунĕ тума, çĕре хресченсене пама ыйтнисене кĕртнĕ пулнă.

Çав пухусенче тухса каласа, боЉшевиксем рабочисене ирĕклĕхе патшаран ыйтнисемпе мар, алла хĕçпăшал тытса çĕнсе илессĕ, тесе ăнлантарнă. Рабочисем çине пăшалпа пересси çинчен боЉшевиксем малтанах асăрхаттарнă. Анчах Зимний дворец патне кайассине вĕсем чарса лартма пултарайман. Рабочисен чылай пайĕ патша вĕсене пулăшассине ĕненнĕ-ха. Массăсем йухăма пит те пысăк вăйпа хутшăннă.

Петербургри рабочисен петицинче каланă:

> „Епĕр, Петербург хулинчи рабочисем, пирĕн арăмсем, ачасем тата пирĕн ватă, пулăшусăр атте-аннесем, сан пата, государь, чăнлăхпа хӳтлĕх шырама килтĕмĕр. Епĕр çуклăха тухса кайрăмăр, пире пусмăрлаççĕ, пирĕн çине чăтма çук йăвăр ĕç тийеççĕ, пиртен мăшкăлаççĕ, пире çын вырăнне шутламаççĕ... Епĕр ĕнтĕ чăтрăмăр, анчах пире ытларах та ытларах çуклăх, правасăрлăх тата йĕркесĕрлĕх ăшне тĕртсе пыраççĕ, пире деспотисăм тата иртĕхсе кайсах пусмăрлани пăвать... Чăтса пурăнасси вĕçне çитрĕ. Пирĕншĕн хăрушă вăхăт çитрĕ, малашне те чăтма çук асапсем тӳсиччен, вилни лайăхрах..." .

1905 çулти йанварĕн 9-мĕшĕнче ирхине ирех рабочисем Зимний дворец патне кайнă, унта унчухне патша пурăннă. Рабочисем патша патне пĕтĕм çемйисемпе—арăмĕсемпе, ачисемпе, стариксемпе кайнă, патша портречĕсем тата турăшсем йатса пынă, туркĕллисем йурланă, хĕçпăшалсăр пынă. Урамсенче пĕтĕмпе 140 пин çын ытла пухăннă.

Иккĕмĕш Николай вĕсене кăмăлсăр кĕтсе илнĕ. Вăл хĕçпăшалсăр рабочисем çине пеме приказ панă. Çак кунхине патша çарĕсем рабочисене пĕр пин ытла вĕлернĕ. 2 пин ытла амантнă. Петербург урамĕсем рабочисен йунĕпе тулса ларнă.

БоЉшевиксем рабочисемпе пĕрле пынă. Вĕсенчен нумайĕшне вĕлернĕ йе арĕсленĕ. БоЉшевиксем çавăнтах, рабочисен йунĕпе тулса ларнă урамсенчех, рабочисене çак усал та тискер ĕçшĕн кам айăплине, унпа мĕнле кĕрешмелине ăнлантарса панă.

Йанварĕн 9-мĕш кунне „Йунлă вырсарникун" теме пуçланă. Йанварĕн 9-мĕшĕнче рабочисем йунлă урок туйаннă. Рабочисем патшана ĕненессине çак кунхине персе пăрахнă. Вĕсем хăйсен прависене кĕрешӳпе кăна илме пултарассине ăнланса илнĕ. Йанварĕн 9-мĕшĕнчи каçала тĕлне рабочи районсенче баррикадăсем тума пуçланă. Рабочисем каланă: „Патша пире тыттарчĕ, епĕр те ăна тыттаратпăр!"

Патшан тискер те йунлă ĕçĕсем çинчен хăрушă хыпар пур çĕре те сарăлнă. Пĕтĕм рабочи клас, пĕтĕм çĕршыв тарăхса ыйханнă. Патшан тискер ĕçĕсене хирĕçлесе рабочисем забастовкă туман тата политикăлă требованисем кăларса тăратман хула пулман. Рабочисем халĕ ĕнтĕ урама „тĕп пултăр самодержави" тенĕ лозунгпа тухнă. Стачечниксен хисепĕ йанвар уйăхĕнче питĕ пысăк цифрăна—440 пине çитнĕ. Пĕр уйăх хушшинче унччен вунă çулхинчен те ытларах рабочисем забастовкă тунă. Рабочисен йухăмĕ питĕ те çӳле çĕкленнĕ.

Роççийăра революци пуçланнă.

2. Рабочисен политикăлă стачкисемпе демонстрацийĕсем. Хресченсен революцилĕ йухăмĕ ӳссе пыни. „Потемкин" броненосĕц çинчи восстани.

Йанварĕн 9-мĕшĕ хыççăн рабочисен революцилĕ кĕрешĕвĕ тата та çивчĕрех политикăлă характĕр йышăннă. Економикăлă стачкăсенчен тата пĕркăмăллă пулнине кăтартакан стачкăсенчен рабочисем политикăлă стачкăсене, демонстрацисене, вырăнĕ-вырăнĕпе патша çарĕсене хĕçпăшалпа хирĕç тăрасси çине куçма пуçланă. Стачкăсем рабочисем йышлăн пурăнакан пысăк хуласенче—Петербургра, Мускавра, Варшавăра, Ригăра, Бакура уйрăмăнах вăйлăн та организацилĕн пулса иртнĕ. Кĕрешекен пролетариатăн малти речĕсенче металлисем пынă. Рабочисен малта пыракан отрйачĕсем хăйсен стачкисемпе сахалтарах ăнланулă сийсене хускатнă, пĕтĕм рабочи класа кĕрешĕве çĕкленĕ. Социал-демократи влийанийĕ хăвăрт ӳснĕ.

Майăн пĕрремĕшĕнчи демонстрацисем чылай вырăнсенче полиципе тата çарсемпе тытăççа кайнипе пулса иртнĕ. Варшавăра демонстрацине персе салатнипе темиçе çĕр çынна вĕлернĕ тата амантнă. Варшавăра демонстрацине персе салатнине хирĕçлесе, ПоЉшăри социал-демократи чĕннипе рабочисем пĕтĕмĕшлĕ забастовкă туса ответленĕ. Май уйăхĕнче тăршшĕпех стачкăсемпе демонстрацисем пĕр чарăнмасăр пулса пынă. Майри стачкăсене пĕтĕм Роççийĕпе 200 пин ытла рабочисем хутшăннă. Баку, Лодзь, Иваново-Вознесенск хулисенчи рабочисем пĕтĕмĕшлĕ стачка хутшăннă. Забастовкă тăвакан рабочисемпе демонстрантсем час-часах патша çарĕсемпе тытăçса çапăçнă. Çакнашкал тытăçусем чылай хуласенче—Одессăра, Варшавăра, Ригăра, Лодзьра тата ытти хуласенче те пулнă.

Уйрăмăнах ПоЉшăри промышлĕннăçлă пысăк центрта—Лодзь хулинче кĕрешӳ питĕ çивчĕн пулса иртнĕ. Лодзь рабочийĕсем хула урамĕсенче вуншар баррикадăсем туса хунă, виçĕ кун хушши (1905 ç. ийунĕн 22-мĕшĕнчен 24-мĕшчен) урамсенче патша çарĕсемпе çапăçнă. Хĕçпăшаллă выступленисем кунта пĕтĕмĕшлĕ забастовкăпа пĕрлешсе кайнă. Ленин çак çапăçусене Роççийăри рабочисен пирвайхи хĕçпăшаллă выступленийĕ тесе шутланă.

Çуллахи стачкăсем хушшинче уйрăмăнах Иваново-Вознесенскри рабочисен стачки палăрса тăрать. Вăл 1905 çулти май уйăхĕн вĕçĕнчен пуçласа август уйăхĕн пуçламĕшчен, урăхла каласан, икĕ уйăх çурă пынă. Стачкăна рабочисем 70 пине йахăн хутшăннă, вĕсем хушшинче хĕрарăмсем нумай пулнă. Стачкăна боЉшевиксен Çурçĕрти комитечĕ йертсе пынă. Кашни кун пекех, хула тулашне, ТалкаЉ çырма хĕррине пиншер рабочисем пуçтарăннă. Кунта, пухусенче, вĕсем хăйсен нушисем çинчен сӳтсе-йавнă. Рабочисен пухăвĕсенче боЉшевиксем тухса каланă. Стачкăна путарса лартас шутпа, патша влаçĕсем рабочисене салатса йама тата вĕсем çине пăшалпа пеме çарсене приказ панă. Темиçе вуншар рабочисене вĕлернĕ тата темиçе çĕршер çынна амантнă. Хулара осаднăй положени туса хунă. Анчах рабочисем хăйсене çирĕп тытнă, ĕçе кайман. Рабочисемпе вĕсен çемйисем выçă ларнă, анчах парăнман. Ытла та вăйсăрланса, начарланса çитнипе çеç рабочисен ирĕксĕрех ĕçе тухмала пулнă. Стачкă рабочисене пиçĕхтернĕ. Вăл рабочи класăн паттăрлăхĕн, çирĕплĕхĕн, чăтăмлăхĕн, пĕркăмăллăхĕн тĕслĕхне кăтартса панă. Вăл Иваново-Вознесенскри рабочисемшĕн чăн-чăн политикăлă воспитани шкулĕ пулса тăнă.

Çав забастовкă вăхăтĕнче Иваново-Вознесенскри рабочисем уполномочĕннăйсен Совечĕ туса хунă, вăл чăннипе Роççийăри рабочи депутатсен пирвайхи Совечĕсенчен пĕри пулнă.

Рабочисен политикăлă стачкисем пĕтĕм çĕршыва хускатса йанă. Хула хыççăн йал çĕкленме пуçланă. Çуркуннерен пуçласа хресченсем хумханма тытăннă. Хресченсем пысăк ушкăнсемпе помещиксене хирĕç кайнă, вĕсен именисене, сахăр, ерех савăчĕсене çĕмĕрнĕ, помещиксен дворецĕсемпе усадбисене вут тĕртсе çунтарнă. Чылай вырăнсенче хресченсем помещиксен çĕрĕсене туртса илнĕ, вăрмансене массăлăн касса пĕтерме тытăннă, помещиксен çĕрĕсене халăха пама ыйтнă. Хресченсем помещиксен тыррисене тата ыттисене туртса илнĕ, вĕсене выçă ларакансене валеççе панă. Помещиксен хăраса ӳкнипе хуласене тармала пулнă. Патша правитĕлстви хресченсен восстанисене путарма салтаксемпе казаксем йанă. Çарсем хресченсене пере-пере пăрахнă, „пуçаракансене" арĕсленĕ, вĕсене хĕненĕ, асаплантарса пĕтернĕ. Анчах хресченсем кĕрешме пăрахман.

Хресченсен йухăмĕ Роççийă центрĕнче, Поволжйĕре, Закавказйĕре, уйрăмăнах Грузире анлăрах та анлăрах сарăлса пыма пуçланă.

Социал-демократсем йала тарăнрах та тарăнрах кĕме пуçланă. Парти Тĕпкомĕ хресченсем патне: „Хресченсем, сирĕн пата пирĕн сăмах" тесе чĕнсе калани кăларнă. Тверь, Саратăв, Полтавă, Чернигăв, Иекатеринослав, Тифлис тата ытти нумай кĕпĕрнĕсенчи социал-демократла комитетсем хресченсем патне воззванисем йанă. Йалсенче социал-демократсем пухусем туса иртерне, хресченсенчен кружоксем организациленĕ, хресченсен комитечĕсем тунă. 1905 çулта çулла чылай вырăнсенче социал-демократсем организациленĕ йалхуçалăх рабочийĕсен забастовкисем пулса иртнĕ.

Анчах ку вăл хресченсен кĕрешĕвĕн пуçламăшĕ çеç пулнă. Хресченсен йухăмĕ 85 уйеса çеç çавăрса илнĕ, урăхла каласан, патша Роççийĕн Йевропă пайĕнчи мĕнпур уйесĕсен шутĕнчен çиччĕмĕш пайне йахăн.

Рабочисемпе хресченсен йухăмĕн тата Роççийăпа Йапони хушшинчи вăрçăра вырăс çарĕсем парăннин влийанийĕ çарта та палăрнă. Патша йĕркин çак тĕрекĕ чĕтренме пуçланă.

1905 çулти ийуЊре Хура тинĕс флотĕнче, „Потемкин" броненосĕц çинче восстани сиксе тухнă. Броненосĕц вăл вăхăтра Одессăран айакра мар тăнă, Одессăра унчухне рабочисен пĕтĕмĕшлĕ стачки пулнă. Восстани тăвакан матроссем хăйсем чи курайман офицерсене вĕлернĕ те, броненосĕца Одессăна илсе пынă. „Потемкин" броненосĕц революци йенне куçнă.

Ленин çак восстанине пысăк хисепе хунă. Вăл боЉшевиксем ку йухăма йертсе пыни кирлĕ, ăна рабочисен, хресченсен тата вырăнти гарнизонсен йухăмĕпе çыхăнтарни кирлĕ, тесе шутланă.

Патша „Потемкина" хирĕç çар карапĕсем йанă, анчах вăл карапсем çинчи матроссем восстани тăвакан хăйсен йулташĕсем çине перессине хирĕç пулнă. „Потемкин" броненосĕц çинче темиçе кун хушши революцин хĕрлĕ йалавĕ вĕлкĕшсе тăнă. Анчах унчухне, 1905 çулта, боЉшевиксен партийĕ кайарахри пек, 1917 çулта пулнă пек, йухăма йертсе пыракан пĕртен-пĕр парти пулман. „Потемкин" çинче меЊшевиксем, есерсем тата анархиссем сахал мар пулнă. Çавăнпа та восстанире уйрăм социал-демократсем хутшăннă пулин те, унăн тĕрĕс тата çителĕклĕ таран опытлă руководствă пулман. Татăклă вăхăтсенче матроссен пĕр пайĕ иккĕленнĕ. Хура тинĕс флочĕн ытти карапĕсем восстани тăвакан броненосĕцпа пĕрлешмен. Çĕркăмрăкĕ тата апат-çимĕç пулман пирки, революцилĕ броненосĕцăн Румыни çыранĕсем патнеле кайса ирексĕрех Румыни влаçĕсене парăнмала пулнă.

„Потемкин" броненосĕц çинчи матроссен восстанийĕ парăннипе пĕтнĕ. Кайарахпа патша правитĕлстви аллине лекнĕ матроссене суда панă. Вĕсенчен пĕр пайне асаплантарса вĕлернĕ, тепĕр пайне катăргăна йанă. Анчах восстани пулса иртнĕ факт вăл уйрăмăнах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. „Потемкин" броненосĕц çинчи восстани çарпа флотри пĕрремĕш массăлă революцилĕ выступлени, патша çарĕсен пысăк пайĕ пирвайхи хут революци йенне куçни пулса тăнă. Çак восстани рабочисен, хресченсен, уйрăмăнах салтаксемпе матроссен массисемшĕн çара тата флота рабочи класпа, халăхпа пĕрлештерес шухăша ăнланмаларах та çывăхрах туса хунă.

Рабочисем массăлă политикăлă стачкăсемпе демонстрацисем çине куçни, хресченсен йухăмĕ вăйланни, халăх полиципе тата çарсемпе хĕçпăшалланса тытăçни, йулашкинчен, Хура тинĕс флотĕнчи восстани,—çаксем пурте халăхăн хĕçпăшаллă восстанине тума кирлĕ условисем çитĕнсе пыни çинчен каланă. Ĕçсем çакăн пек пулни либераллă буржуазине хыттăнах хускатнă. Революцирен хăраса, кунпа пĕрлех тата патшана революципе хăратса, вăл революцине хирĕç патшапа килĕшӳ тума майсем шыранă, халăха „лăплантарас", революци вăйĕсене вaклантарса йарас тата çав майпа „революци хăрушăлăхĕсене" сирсе йарас тесе „халăх ваЉЉи" пĕчĕк реформăсем тума ыйтнă. „Хресченсене çĕр касса памала, унсăрăн вĕсем хамăра пусаççĕ",—тенĕ либераллă помещиксем. Либераллă буржуази влаçа патшапа пĕрле тытма хатĕрленнĕ. „Пролетариат кĕрешет, буржуази влаç патне йăпшăнса пырать",—тесе çырнă Ленин вăл кунсенче рабочи клас тактикипе либераллă буржуази тактики çинчен.

Патша правитĕлстви рабочисемпе хресченсене çаплах пĕтĕм хайарлăхпа путарса пынă. Анчах вăл пĕр репрессисемпе кăна революцине пĕтерме май килменнине курмасăр тăма пултарайман. Çавăнпа та репрессисемпе пĕрлех вăл чейе майсемпе те усă курма пуçланă. Пĕр йенчен, вăл хăйĕн провокатăрĕсем пулăшнипе Роççийăри халăхсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерме пуçланă, йеврейсем хушшинче погромсем, тутарсемпе армйансем хушшинче çапăçусем туса пынă. Тепĕр йенчен,—Земски собор йе Государствă думи пек „представитĕлнăй учреждени" пухма сăмах панă, Булыгин министра çавнашкал думăн пройектне туса хатĕрлеме хушнă, анчах вăл думăн саккун кăлармали правасем пулмала пулман. Çак ĕçсене пурне те революци вăйĕсене ваклантарас тата революцирен халăхăн вăтам сийĕсене татса илес шутпа тунă.

Халăх представитĕлствинчен мăшкăласа тунă çак каррикатурăна пĕтерсе хурас шутпа, боЉшевиксем Булыгин думине хирĕç бойкот тунă.

МеЊшевиксем, пачах урăхла,—думăна пĕтерсе лартас мар, унта хутшăнса ĕçлес, тесе йышăннă.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

Мана комсомол çитĕнтерчĕ

Манăн пурнăç комсомол воспитани парса çитĕнтернĕ пиншер совет çамрăкĕсен пурнăçĕпе пĕр пек.

Граждăн вăрçинче чирлесе таврăнсан нумай вăхăт хушши асапланнă хыççăн атте 1934 çулта вилчĕ. Аттерен улттăн пĕр тăван тăлăхсем йултăмăр. Анчах, совет влаçĕ пулăшнипе, епĕр çын пултăмăр. Епĕ Вăрнарта ветеринарипе зоотехникă техникумĕнчен вĕренсе тухса ветеринари врачĕн помошникĕ пултăм.

1931 çултанпа епĕ ленинла-сталинла комсомол членĕнче тăратăп. Комсомол мана паттăр, хăйулă, хăравсăр пулма вĕрентсе çитĕнтерчĕ.

Кăçал мана паттăр Хĕрлĕ Çар ретне илчĕç, епĕ уншăн калама çук савăнтăм. Аттесем çĕнсе илнĕ телейлĕ пурнăçа тăшмансенчен сыхласа тăрас ĕçре, епĕ ленинла-сталинла комсомол членĕн йатне чыслăн тытса пырăп.

Храмкин.

Парти пурнăçĕ

ПСК(б)П историне вĕренме хатĕрленеççĕ

ШĂХАСАН. ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне вĕренме районра 28 кружок тума йышăннă, вĕсенчен коммуниссем валлĕ—5, комсомолĕцсем валли—11, учителсем валли—12.

Октябрĕн 8-мĕшĕнче райком хăйĕн ларăвĕнче вăл кружоксем валли пропагандиссене çирĕплетрĕ. Пропагандиссен шутне райком членĕсенчен 5 çын кĕртнĕ, ытти сем парти, комсомол активĕнчен. Çав ларурах райком пропагандиссен çеминарĕн ĕç планне çирĕплетрĕ.

С. Соколов.

Конференци решенисене вĕреннĕ май

Шăнкăртам районĕнчи пуçламĕш парторганизацисен пухăвĕсем облăçри XIX-мĕш конференци решенисене ырласа, вĕсене пурнăçа кĕртме татăклă решенисем йышăнчĕç тата пурнăçа кĕртме тытăнчĕç.

Колхозниксем хушшинче конференци решенисене ăнлантарса пана май, колхозниксем бригадăсем организацилесе Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул туна çĕре ĕçлеме тухса кайрĕç. Колхозсенчи активиссем ытти колхозниксемпе пĕрле ĕçлеме кайаççĕ. Çапла районран пурĕ 70 çын çуран, 24 лашапа чукунçул туна çĕрте ĕçлеме кайрĕç.

Партин пуçламĕш организацисем ĕçе анлăн сарса йанипе халĕ пур колхозсенче те государствăна аш-какай парасси саралса пырать. 1939 çулшăн аванс шучĕпе районĕпе 30 процент пана. Уйрăм колхозсем, сăмахран, „Марс“, „Сталь“ колхозсем, аванс шучĕпе 100 процент парса татма йышăнчĕç.

Çапла вара, конференци материалĕсене ăнлантарас ĕç хуçалăх кампани планĕсене тултарассипе çыхăнса пырать.

Кужикăв.

Облăçри XIX-мĕш партконференци итогĕсене сӳтсе-йаваççĕ

ЙЕПРЕÇ. ПСК(б)П райкомĕ йышăннă тăрăх, октябрĕн 4—13-мĕшсенче районри пур пуçламĕш парторганизацисенче те ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференци итогĕсене сӳтсе-йавас ыйтупа коммуниссен пухăвĕсем иртмеле. Халĕхи вăхăтра чылай организацисенче пухусем пулса иртрĕç. Пухусем уйрăмах „Красный фронтовик“ колхозри тата Ейпеç пуçламĕш парторганизацисенче активлă иртнĕ.

Докладсене пур çĕрте те ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцинче пулнă делегатсем туса параççĕ.

Ф. Захарăв.

ВĂРНАР. Октябрĕн 9-мĕшĕнче районри парторганизацин пухăвĕ ПСК(б)П чăваш организацин XIX-мĕш конференцин итогĕсене сӳтсе-йаврĕ. Пренире 19 çын тухса каларĕç.

Тухса калакансем облăçри партконференцин решенисене пĕтĕмĕшпех ырласа, парти, совет, хуçалăх, суту-илӳ организацисен ĕçĕсене çирĕппĕн критиклесе кайа йулса пырассине хăвăрттăн пĕтерме, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерессишĕн çивĕччĕн ĕçлеме, революцилĕ сыхăлăха тата çӳлерех хăпартма, большевисăмла вĕренсе алла илессине вăйлатма хушса хăварчĕ.

С. Сергейĕв.

ПСÇЛКС 20 çул тултарас умĕн

Ĕçе лайăхлатрĕç

Çĕрпӳ районĕнчи „Хĕрлĕ флот“ колхозри комсомолĕцсем комсомол 20 çул тултарнă йатпа хăйсем çине илнĕ обйазательствăсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. А. Прокопйĕв комсомолĕц оборонă значокĕсен нормисене пама обйазательствă илнĕччĕ. Халĕ вăл ВС, ГСО, ПВХО значокĕсен нормисене пачĕ. Васильйĕвпа Данилăв комсомолĕцсем те ГСО нормисене парса значоксем илчĕç.

Комсомолĕцсем массăлă-политикăлă ĕçе аванлатрĕç. Халь çитес перепис çинчен ăнлантарас ĕç пырать. Комсомолĕцсем парти историн Кĕске курсне тарăннăн вĕренме хатĕрленеççĕ.

И. Давыдăв.

Йетĕрнери професçилĕ-техникăлă шкулта вĕренекен комсомолĕцсем йубилейа хатĕрленнĕ май политвĕренӳ ĕçне тата оборонă ĕçне вĕренессине лайăхлатрĕç. Халĕхи вăхăтра оборонă ĕçне вĕренмели кружоксенче 29 çын вĕренеççĕ. Иртнĕ кунсенче 9 çамрăк комсомол членне кĕчĕç.

Антонăв.

Çамрăксен художĕствăлă пултарулăх смотрĕ

ПСÇЛКС Йелчĕк райкомĕ ленинла-сталинла комсомол XX çул тултарнă йатпа çамрăксен художĕствăлă пултарулăх смотрне туса иртерет. Вĕçĕ-хĕррисĕр хаваслă çамрăксем район центрĕнчи клубра хăйсен чаплă пултарулăхĕсене кăтартаççĕ.

Кавалти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем (руководителĕ Доброхатăв) смотра питĕ лайăх хатĕрленнĕ. Куракансем вĕсен кашни номĕрне ырласа йышăнаççĕ. Шăмалакри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем те (руководителĕ Кондратйĕв) шавлă оркестрпа лайăх выляса пачĕç.

Çамрăксен пултарулăхне районри колхозниксем радио тăрăх итлеме ĕмĕтленнĕччĕ, анчах радиоузĕл (пуçлăхĕ Носăв) çак илемлĕ номĕрсене микрофон тăрăх парассине йĕркелеймерĕ.

К. Воробйов.

Малта пыракан финанс агĕнчĕсен ырă примерĕ

ВĂРНАР. Районри финанс пайĕн йалсенче 29 агĕнт ĕçлеççĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ ĕçе тĕрĕс организациленĕ, массăпа тачă çыхăнса ĕçлеççĕ, çавăнпа финанс планне уйăхран уйăха, квартăлтан квартăла ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Акă, финанс агĕнчĕ Храмкин йулташ Кольцовкă йалсоветĕнче ĕçлет. Вăл массăлă ĕçе тĕрĕс организациленĕ. Иалсоветри финанс çекципе пĕрле ĕçлет. Финанс активне вĕрентсе, кăтартса парать. Финанс планне вăхăтра тултарас тесе Сталин йулташ йачĕпе тăракан колхозра тухса тăракан нумай тиражлă „Сталинец“ хаçата статйасем çырса тăрать. Çапла ĕçленипе те ĕнтĕ Храмкин йулташ укçа-тенкĕ пухас ĕçпе йалсоветне мала кăларчĕ. Иалсовечĕ виççĕмĕш квартăлти финанс планне 120 процент тултарса районра пĕрремĕш вырăна йышăнчĕ.

Пăртас йалсовечĕ иртнĕ çулсенче укçа-тенкĕ пухас йенĕпе начар ĕçлесе пынă. Финанс агĕнчĕ пулса Аниçимăв йулташ ĕçлеме пуçласан квартăлти плана 112 процент тултарчĕ. Халь Аниçимăв йулташ Октябрĕрти Социалисăмлă Аслă революци уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса 4-мĕш квартăлти финанс планне срукчен тултарассишĕн кĕрешет.

Çавалкас Мăрат йалсовечĕ те финанс агĕнчĕ Йемелйанăв йулташ тăрăшса ĕçленипе виççĕмĕш квартăлта укçа-тенкĕ пухас плана 112 процент тултарнă.

Ку йалсоветĕнче финанс çекци членĕсем пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Çавăн пекех финанс агĕнчĕсенчен Гуçĕв (Хапăс), Логинăв (Карачура), Иванов (Кĕçĕн Кипек), Быкăв (Нурăс), Григорйĕв (Чăрăш Хирлеп)), Пухăв (Сăкăт), Петров (Уравăш) йулташсем укçа-тенкĕ пухас плана ытлашшипех тултарчĕç.

Анчах хăшпĕр агĕнтсем хăйсене шанса пана ĕçе тивĕçлипе туса пымаççĕ-ха. Кунта чи малтанах агĕнт Смычков йулташ çинчен каламала. Смычков йулташ массăпа çыхăнса ĕçлемест. Финанс активне пухса калаçу туса иртермест. Çавна пула та вăл ĕçлекен Иртеменкасси йалсовечĕ виççĕмĕш квартăлти укçа-тенкĕ пухас плана 51 процент çеç тултарчĕ.

Кăкшăм йалсоветĕнче ĕçлекен агĕнт Алексейĕв йулташ та укçа-тенкĕ пухас плана 73 процент çеç тултарчĕ.

Финанс агĕнчĕсенчен Сергейĕв, Трофимăв, Руссков, Радайĕв йулташсем пĕрре те çине тăрса ĕçлемеççĕ. Хăйсене çирĕплетнĕ йалсовечĕсенче нихăш квартăлта та укçа-тенкĕ пухас плана тултарса пымаççĕ. Вĕсем çителĕклĕн ĕçлеменнине пула виççĕмĕш квартăлти укçа-тенкĕ пухмали плана районĕпе те 90 процент ытларах çеç тултарнă.

Районри финанс пайĕ те финанс агĕнчĕсемпе кирлĕ пек ĕçлемест. Агĕнтсем хушшинче социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йаман.

Н. Козлов.

Кружоксем уйава хатĕрленеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). „Большевик“ савăтра ĕçлекенсенчен 110 çын ытла клуб çумĕнчи тĕрлĕрен кружоксенче активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Халĕ кружоксем пурте Октябрĕрти Социалисăмла Аслă революци уйавне хатĕрленеççĕ. Кашни çирĕп план тăрăх ĕçлесе пырать.

Режиççор Дальскайа йул. йертсе пыракан драмкружок (кружокра 30 çын) Октябĕр уйавĕн кунĕсенче „Аристократы“ пйесăна, ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă кун валли „Весенний смотр“ пйесăна лартса пама тата концерт хатĕрлеççĕ. Иванов йулташ йертсе пыракан физкультура кружокĕ (13 çын), Дальскайа тата пианист Беспалăв йулташсем йертсе пыракан балетнайпа музыкă кружокĕсем тĕ çĕнĕрен номĕрсем, çемĕсем вĕренеççĕ. Заньатисем расписани тăрăх йĕркелĕ пулса пыраççĕ.

Кружоксенче рабочисемпе инженерлă-техниклă работниксен арăмĕсем те пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ. Çĕвĕ кружокĕнче 20 çын вĕренет, вĕсем те уйава хатĕрленеççĕ.

Н. Иваницкий.

Тăрмăшри драмкружок ĕçĕсем

Тăрмăшри (Тăвай р.) клуб çумĕнче иккĕмĕш çул ĕнтĕ драмкружок тата хорпа ташă кружокĕсем ĕçлеççĕ. 1937 çулта вăл кружоксем пурĕ 34 выступлени тунă, вăл шутран: Тăрмăшра 20, районри культура çуртĕнче—6, кӳршĕри колхозсенче—8.

Драмкружокра 28 çын, вĕсенчен 9 хĕр. Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă уйава хатĕрленнĕ май Тăрмăшри артиссем „Тупа“ тата „Мешченсем“ йатлă пйесăсене лартса пама хатĕрленеççĕ.

Кăçалхи план тăрăх драмкружокăн 15 спектакль, 15 концерт тата 10 вечĕр тумала, пукане театрĕ организацилемеле тата музыкă инструменчĕсем илмеле.

Çак мĕнпур ĕçсем клуб пуçлăхĕ И. Белков йулташ пултарулăн йертсе пынипе пулса пыраççĕ, районра вăл чи лайăх культработник шутланать.

Вл. Илйин.

Платниксен бригадисем

Шупашкарти стройкăра ĕçлекенсенчен йулашки вăхăтра уйрăмăнах платниксем лайăх ĕç тĕслĕхĕсем кăтартма пуçларĕç. Савченко йулташ бригади кулленех нормăна 200-250 процентшар тултарать. Акă çентябрĕн 25-мĕшпе октябрĕн 10-мĕш хушшинче вăтамран шутласан кашни кунах плана бригадă 227 процент тултарчĕ, бригадă членĕсем кашнийех 19-шар тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Ларин йулташ йертсе пыракан платниксен бригади те йаланах плана ытлашшипех тултарса ĕçлет. Унăн бригадинчи Лашманăв, Денисăв, Николайĕв, Пигачов йулташсем нормăсене тултарса пынипе пĕрлех, хăйсен квалификацине ӳстерес йенĕпе техминимум тата политика кружокĕсене вĕренме çӳреççĕ.

Кашни бригадă Октябĕр уйавне ĕçре çĕнĕ çитĕнӳ тунипе кĕтсе илессишĕн ăмăртса ĕçлет.

В. Димитрийĕв.

Строительствă ĕçĕ çаплах йулса пырать

Партипе правительствă строительствă ĕçĕ çине йаланах пысăккăн пăхаççĕ. ПСК(б) Парти Тĕкомĕнче 1935 çулти декабĕр уйăхĕнче строительствă ыйтăвĕсем тăрăх пулса иртнĕ канашлура Молăтăв йулташ строительствă ыйтăвĕсем пирĕн кирек хăçан та хуçалăх ыйтăвĕсем çеç мар, политикла ыйту пулса тăни çине кăтартса пана. Ку пуриншĕн те паллă, социалисăмăн ыранхи кунĕ чи пирвайах епĕр пайан туса пыракан строительствăран килет. „Социалисăмăн ыранхи кунĕ“ пайанхи строительствăран килнĕрен те ĕнтĕ партипе правительствă капитальнăй строительствă ĕçне çултан çулах нумай укçа-тенкĕ хываççĕ.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1936 çулти февралĕн 11-мĕшĕнче „Строительствă ĕçне лайăхлатасси тата строительствă хакне йӳнетесси“ çинчен тата ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти февралĕн 26-мĕшĕнче „Сметăпа проект ĕçĕсене лайăхлатасси тата строительствăна укçа-тенкĕ парассине йĕркелесси“ çинчен йышăннă постановленисенче капитальнăй строительствă ĕçĕнчи çитменлĕхсене тĕплĕн уçса палăртса, вăл çитменлĕхсене пĕтерме строительсене конкретлă программă, „строительствă ĕçне лайăхлатма татăклă çул кăтартса пана.

Çак постановленисем тухнăранпа нумай вăхăт иртрĕ. Анчах та строительствă организацисем тата халăх комиссариачĕсем ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ кăтартса панисене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе çитермен, чылай çĕрте вăл кăтартусене питех те сӳрĕккĕн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Капитальнăй строительствă ĕçне халăх ташманĕсем нумай сăтăрланă. Халăх ташманĕсем строительствă ĕçне хывмали укçа-тенкĕне нумай çĕре сапаласа тума тытăннă çуртсене експлоатацине парассине вăрăма хăварнă, кирлĕ, пысăк строительствăсене туса çитерессине чăрмантарнă. Çавна пула 1937 çулта строительствă планĕ пурнăçа кĕмесĕр йулнă.

Халăх ташманĕсен тĕп йăвисене çĕмĕрсе тăкнă. Вĕсем туса хăварнă сăтăрла ĕçсен йулашкисене хăвăрттăн пĕтерсе пынă пулсан, кăçалхи строительствă ĕçне ăнăçлăн пурнăçа кĕртме мĕн кирлисем пурте пулнă. Анчах строительствă организацисем, халăх комиссариачĕсем хăйсен ĕçĕсене çирĕппĕн организацилемен пирки строительствă планне тултарасси çаплах йулса пырать.

Канаш—Шупашкар чукунçул строительстви вăрăма йулчĕ. ССРС Çулйĕр Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович й. чукунçула вăхăтлăх експлоатацине октябрĕн 1-мĕшĕнче парасси çинчен кăларнă приказа пурнăçа кĕртмен. Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх капитал хывас плана 8 уйăх хушшинче 43,4 процент çеç тултарнă. Улатăрти гармонь хапăрăкне тăвасси тата Вăрнарти фосфорит савăтне йусаса аслатасси начар пырать. Вĕсем капитал хывас плана 50 процент та тултарман.

Стройтрест пĕлтĕрхи пекех 1938 çулти строительствă планне тултарасссине хăрушлăх умне илсе пычĕ. Шупашкарти Советсен çуртне тума пана укçа-тенкĕрен октябрĕн 1-мĕш тĕлне 36,9 проценчĕпе çеç усă курнă. Шупашкарти 880 вырăнла шкула вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле туса пĕтермеле пулнă, октябрĕн 1-мĕш тĕлне те туса çитермен. Шупашкарти ача çуратмали çурта тума кирлĕ материалсем çителĕклĕ пур. Анчах стройтрест çаврăнаçусăр ĕçленипе строительствă ĕçĕ вăрăма йулса пырать.

Çавăн пекех Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарнаĕчĕн строительствă ĕçне ăнăçлăн илсе пыма строймaтериалсем çителĕклĕ. Апла пулин те Улатăрта йаслĕ тăвас плана 46,8 процент, Шупашкарти йаслĕне тăвассине 22,9 процент çеç тултарнă. Чурачăк пульницинче служба çурчĕсем тума пана укçапа пачах та усă курман.

Коммуналă хуçалăх Халăх Комиссариачĕ тăрăх та плана тултарасси начар пырать. Шупашкарти електростанцине тăвас тĕлĕшпе çулталăкри плана октябрĕн 1-мĕшне 37 процент çеç тултарнă. Улатăрта мунча, електростанцине тăвасси те çав тери кайа йулнă.

ПСК(б) Парти Обкомĕпе Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ шкул строительствине вăйлатас тĕлĕшпе татăклă кăтартусем пана пулин те, Çутĕç Халăх Комиссариачĕн, райĕçтăвкомсен руководителĕсем ĕç çине ответсăр пăхнине пула шкулсене тăвас срука пăснă. Иртнĕ çулта туса пĕтермен 16 шкултан кăçал вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле 4 шкула çеç туса çитернĕ. Октябрĕн 1-мĕшне йалсенчи шкул строительстви планне 71 процент кăна тултарнă.

Строительствă руководителĕсем строительствă хакне йӳнетес тĕлĕшпе пачах ĕçлемеççĕ. Шупашкарти електростанцине тунă çĕрте строительствă хакне йӳнетес вырăнне 8,5 процент ӳстернĕ т. ыт. те.

Капитальнăй строительствă ĕçĕ йалхуçалăх йенĕпе те нумай мала кайман. Çентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне строительствăсем тума пана укçа-тенкĕрен 38,2 проценчĕпе çеç усă курнă. Кувакинăри МТС строительствă планне 7 процент, Тракри МТС 7,2 процент кăна тултарнă.

Чăвашторг, Чăвашсойуз йенĕпе строительствă планне тултарасси хăрушлăх умĕнче тăрать. Вăрмарта елеватăр тăвас плана 28 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ. Магазинсем тăвас тĕлĕшпе пĕр район та плана тултарман.

Мĕншĕн-ха капитальнăй строительствă ĕçĕ йулса пырать? Халăх комиссариачĕсен, хуçалăх организацисен руководителĕсем капитальнăй строительствă ĕçĕ çине ответсăр пăхаççĕ. Вĕсем ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шаннă, большевикла кĕрешӳ пуçарман. Стройтреста халĕхи вăхăтра тĕрлĕ квалификацилĕ рабочисем 500 çын кирлĕ. Стройтрест ĕç вăйĕ пухас тĕлĕшпе ним те тумасть. Рабочисен пурнăç условисене лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Стахановла йухăма йертсе пымаççĕ.

Çулталăк пĕтиччен вăхăт нумай йулмарĕ. Çак кĕске вăхăтра кăçалхи строительствă планне пĕтĕмпех, пахалăхпа тултарса çитерме условисем çителĕклĕ. Халăх комиссариачĕсен, строительствă тата хуçалăх организацисен сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерсе, строительствă ĕçне мала туртса кăларма халех татăклă ĕçсем туса иртермеле. Кашни стройкăра çирĕп йĕркелĕх, график пултăр. Вăл графике пурнăçа кĕртсе пыма ĕç вырăнĕсене лайăх йĕркелемеле, механисăмсемпе туллин усă курмала.

Строительствăсенче стахановĕцсемпе ударниксем сахал мар. Политикăлă-массăлă ĕçе вăйлатса пынă никĕс çинче, стахановĕцсен опытне сарса стахановла йухăма анлăн çĕклесе пымала тăвас пулать. Халĕ çĕршывра Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту саралса пырать. Строительсен анлă массине ăмăртăва хутшăнтарса, строительствă планне ăнăçлăн тултармалла тăвар.

М. Лукийанăв.

Культмассăлă ĕçе аван йĕркеленĕ

Алманчри (Трак р.) комсомолĕцсемпе суйузра тăман çамрăксем кашни ернерех вечĕр туса иртереççĕ йе спектакльсем лартса параççĕ. Комсомолĕцсем тĕне хирĕç пропагандăна лайăх йĕркеленĕ.

Колхозниксем кашни каçах вулав çуртне пухăнса хаçат-журналсем, кĕнекесем вулаççĕ. Вулав çурчĕн 5 пине йахăн тĕрлĕрен кĕнекесем, биллиард, патефон, шашкăпа шахмăт пур.

Çамрăксем валли политграмăтă кружокĕ организациленĕ. Кружок заньатийĕсем йĕркелĕ пулса пыраççĕ. Иалта хор тата шахмăтпа шашкă кружокĕсем ĕçлеççĕ.

Ф. Гаврилăв.

Йут çĕршывпа сутă тăвакансем

Фашисла Германи, унпа пĕрле фашисла Польшă Чехословаки çĕрне пайăн-пайăн таткалаççĕ. Германи çарĕсем, çавăн пекех Польшă çарĕсем те Чехословаки çине тĕшкĕрсе кĕчĕç. Мӳнхĕнри килĕшӳре кăтартса пана районсене çеç мар, нимĕç фашисĕсем тата ытти районсене тыта-тыта илеççĕ. Вĕсемпе пĕрле Венгри те „хăйĕн“ тӳпине йарса илесшĕн хыпаланать.

Историре вăрă-хурахла сĕмсĕр ĕçсем сахал мар пулнă, анчах Чехословаки таврашĕнче пулса иртекен ĕçсем пекки пулман-ха. Чехословакине вăрçмасăр-мĕнсĕр парăнтарчĕç. Чехословаки—хăйхаллĕн пурнакан культурлă, демократилĕ çĕршыв. Унта 15 мĕлйун çын пурăнать. Çав халăх, хăйĕн килĕнче хăй хуçа пулса, ирĕклĕн пурнасшăн. Анчах буржуалă государствăсен пуçлăхĕсем урăхла шутлаççĕ. Вĕсем хăйсем патĕнче кăна мар, йут çĕршывсенче те хуçа пуласшăн. Хăйсенчен вăйсăртарах çĕршывсене нимĕн вырăнне те хумаççĕ, сутма та илме те пултараççĕ. Çапла майпа Англипе Франци Чехословакине сутса йачĕç.

Германи фашисăмĕ тин кăна мар, тахçантанпах Чехословаки çине шăл хăйраса пурăнать. Чехословаки уншăн пыра урлă ларнă шăмă пек туйăнать. Вăл ăна мĕнле те пулин çăтса йарасшăн, çапла вара Хĕвелтухăçнеле кайма çул уçса хатĕрлесшĕн Германи фашисăмĕ çапла шутланă: Чехословакире те Испанири пекех, урăхла каласан, шалтан тапса сиктерме пулать, тенĕ. Ку тĕлĕшпе вăл сахал мар вăй хучĕ. Хăйĕн агентурине—Судетри нимĕçсен партине пĕрре кăна мар вăслаттарса пăхрĕ. Нимĕн те тухмарĕ. Чехсем йе словаксем кăна мар, Чехословакири нимĕçсен тĕп масси те фашисăм хыççăн каймасть.

Хăшпĕр тĕслĕхсем. Фашиссем—генлейнăвĕцсем Судет облăçĕнче хĕçпăшаллă пăлхав тапратса йарасшăн пулчĕç. Судет облăçĕнчи халăх фашиссен йенче мар, демократи йенче, Чехословаки республикĕ йенче пулчĕ. Халăх пулăшнипе Чехословаки правительстви фашисла пăлхава çийĕнчех путарса лартрĕ. Вăрçă çывхарса килнине кура, Чехословаки правительстви çара кайма тивĕçлисене пурне те мобилизацилерĕ. Ултă сехет хушшинче иртес мобилизаци 4 сехет хушшинче калама çук йĕркелĕн иртрĕ. Çак вăл Чехословаки халăхĕ фашисăма хирĕç кĕрешме хатĕр тăнине нимрен те лайăх кăтартса парать. Чехословаки халăхĕ халĕ те, хăйĕн çĕршывне чĕррĕн çурса таткаланă вăхăтра та, хул-çурăма усмасть. Вăл фашисла хăрушлăх умĕнче пуçа тайса тăмасть, тăрас та çук.

Чехословакине çăлса хăварма пур май та пулнă. Чехословаки халăхĕ хăйĕн çĕршывне хӳтлеме хатĕр тăнă. Çавăн пекех Франципе Англири рабочисем Чехословакине пулăшма хатĕр пулнă. Сăмахран, Францин авиосавăчĕсенче ĕçлекен рабочисем сверхурочнай ĕçлеме, ĕçукçине запаснайсен çемйисене пама пулнă. Строительствăра ĕçлекен рабочисем забастовкă тума пăрахнă пулнă. Ку ĕнтĕ çĕршывăн мĕнпур вăйне пухас тенине пĕлтернĕ. Çавăн çумне тата Совет Союзĕ Чехословакине пулăшма хатĕр пулнине хушмала. Кĕскен каласан, миршĕн тăракан çĕршывсен пĕрлĕх фронтне тума май килнĕ. Миршĕн тăракан çĕршывсем фашисла-агреççилĕ çĕршывсенчен нумай вăйлăрах.

Анчах Англипе Франци правительствисем çавăнпа усă курма тăрăшман. Гитлĕр чӳхенме тапратнă вăхăтра вĕсем ăна хавхалантарса пынă, кайала чактарас вырăнне малала кайма ăшши парса тăнă. Англипе Франци чи йăвăр вăхăтра Чехословакине пăрахса хăварчĕç, сутса йачĕç.

Йĕркипе илсен ĕç акă мĕнле пулса пычĕ. Гитлĕр ĕшкĕртнипе Чехословакири фашиссем пăлхав пуçласа йараççĕ. Агрессăра çăварлăхласа лартас вырăнне, Англи правительствин пуçлăхĕ Чемберлен Гитлĕр патне Берхтесгаден хулине вĕççе кайать. Гитлĕр Чемберлен умне пĕр именсе тăмасăр Чехословакирен Судет облăçне татса илес ыйтăва лартать. Чемберлен килĕшет, килĕшет те кайала килне вĕççе таварнать. Унтан Англипе Франци министрĕсен канашлăвĕ пухăнать. Çав канашлу хыççăн Англипе Франци Чехословакине ультиматум параççĕ, Судет облăçне Германине татса пама килĕштереççĕ.

Чемберлен каллех Гитлĕр патне Годесберг хулине вĕççе кайать. Чемберлен Германине мĕншĕн тек-тек хутланине Гитлĕр часах туйса илет. Гитлĕр малтанхи требованипе çырлахмасть. Вăл Чемберлен умне çĕнĕ те пысăкрах ультиматум лартать, çав ультиматума октябрĕн 1-мĕшĕнче пурнăçа кĕртме хĕтĕртет, пурнăçа кĕртмесен вăрçă пуçласа йарассипе хăратать.

Чехословаки правительстви, Гитлĕр ультиматумне сирсе пăрахса, пĕтĕмĕшлĕ мобилизаци туса иртерет. Çав вăхăтрах Франци запассене, Англи хăйĕн тинĕс флотне мобилизацилеççĕ. Гитлĕр çавна кура чӳхенме пуçлать, хăмсарса калаçас вырăнне тилĕ пек йăпăлтатма тытăнать. Чемберлен çак тапхăрпа та усă курма шутламасть. Вăл Гитлĕр патне васкаса çыру çырать, çав çырура Англи Чехословакишĕн тăрас çуккине систерет, Гитлĕр çавăн хыççăн нихăçанхинчен те ытларах шăртланса кайать.

Йулашкинчен, Германи хулинче, Мӳнхĕнре тăватă государствă пуçлăхĕсен „конференцийĕ“ пухăнать. Кунта Гитлĕр, Муссолини, Чемберлен тата Даладйе Чехословакине касса пайласси çинчен калаçса таталаççĕ. Çавăн хыççăн нумай та вăхăт иртмест, Германи çарĕсем Чехословакине тĕшкĕрсе те кĕреççĕ. Германи хыççăн Польшă Чехословакине турткалама тытăнать.

Англипе Франци правительствин пуçлăхĕсем—Чемберленпа Даладйе „çĕнтертĕмĕр“ тесе Мӳнхĕнрен кайала киле таварнаççĕ. Вĕсене килĕсенче чечексемпе кĕтсе илеççĕ. Анчах хавхалану нумайа пымасть. Часах сӳнсе ларать. „Çĕнтерӳ“ мухмăрĕ иртнĕ-иртменех Англире те, Францире те хăшпĕрисем, Чемберленпа Даладйе патне çывăх тăракансемех, хăйсенчен хăйсем тĕлĕнсе „мĕн пулĕ-ши“ тесе ыйтаççĕ.

„Мĕн пулĕ-ши“ тесе ыйтма сăлтавĕ пур. Германи фашисăмĕ Чехословакин пĕр пайне туйаннипе лăпланма шутламасть. Вăл Чехословакине пĕтĕмпех тытса илме тапаçланать. Мӳнхĕнри килĕшӳ çав ирсĕр ĕçе тума алăк уçса пани çеç пулса тăрать. Германи фашисăмĕ хăйĕн йунлă аллине Румыни йенеле тăсать, ăна Румынири нефтьпе тырпул канлĕх памаççĕ. Тĕлĕкре те Румыни нефти курăнать. Германи фашисăмĕ тахçантанпах çав нефть çине куç хывса пурăнать. Кам пĕлет, тен, Англипе франци Румынине те сутса йарĕç. Халĕ, Чехословакине сутнă хыççăн, вĕсем Испани республикине пăвса пăрахма хатĕрленеççĕ вĕт. Йут çĕршыва сутма вĕреннĕ çынсенчен пурне те кĕтме пулать.

Пайанхи куна Францин хăйĕн те пурнăç чаплах мар. Англи хыççăн кайса, вăл хăйĕн сойузникĕсене йăлтах çухатса пĕтерчĕ, йулашки шанчăкла сойузникне—Чехословакине фашисăм çăварне пăрахса пачĕ. Халĕ Францине икĕ йенчен фашисла икĕ çĕршыв—Германипе Итали хупăрласа тăраççĕ. Çав çĕршывсемех Францине çурăмран—Испани урлă тӳпкеме хатĕрленеççĕ. Çапла ĕнтĕ Франци пĕрпĕччене тăрса йуласси инçех те мар. Пайан вăл Англипе пĕрле утать пулсан, ыран ăна Англи айаккала тĕртсе хăварма пултарать.

Çапла ĕнтĕ, Англипе Франци Мӳнхĕнре мир мар кĕрешсе илчĕç, вăрçă хăрушлăхне çеç пысăклатрĕç.

П. Иванов.

В. Ливанăвă художник тунă плакат. „Искусствă“ издательстви кăларнă. В. Иванов репродукцийĕ (Союзфото).

Канаш—Шупашкар чукунçул строительстви

Ĕç вăйĕ тăратмаççĕ

Канашпа-Шупашкар хушшинчи чукунçул строительствинче. Тутаркас районĕнчен 150 комсомолĕц, 50 колхозник, Ишлей районĕнчен 145 çын (вăл шутран 80 комсомолĕц) ĕçлемеле. Анчах пайанхи куна ĕç вăйĕ парса тăрассипе çав районсенчи комсомол, совет организацисем йапăх ĕçленипе строительствăра ĕçлекенсен шучĕ çав тери сахал. Тутаркас районĕнчен строительствăра пĕтĕмпе те вуншар çын çеç шутланать. Хăшпĕр колхоз председателĕсем хăйсем ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. Акă Сталин йачĕпе тăракан колхозран çак кунсенче 7 çын килчĕç. Колхоз председателĕ членсем хушшинче ĕçе йĕркелес вырăнне икĕ кун хушши ĕçе тухмарĕ. Ĕç дисциплини те йапăх пулчĕ, вĕсем ик-виç кун ĕçлерĕç те киле кайрĕç. Ытти колхозсем те („Смычка“, „Стрела“, Сталин тата Калинин йачĕпе тăракан колхозсем) икшер кун ĕçленĕ хыççăнах кайала кайрĕç.

Строительствăра тимлĕн ĕçлекенсем те пур. „Первая пороздаˮ колхозран (Тутаркас р.) нумайах пулмасть 6 комсомолĕц килчĕç. Вĕсене парти членĕ Мигушов йулташ йертсе пырать. Çак кĕске вăхăтрах пĕр-пĕрин хушшинче социалисăмлă ăмăртăва сарса йанă май, бригада кулленхи плана ытлашшипех тултарса ĕçleме пуçларĕ. Октяберĕн 10-мĕшĕнче комсомолĕцсем пурте плана 152 процентшар тултарчĕç.

Ĕç вăйĕ çитменни пайанхи куна строительствă ĕçĕ йапăх пурнăçа кĕрсе пынин пĕр сăлтавĕ пулса тăрать. Районсен чăннипех строительствăна çителĕклĕ таран ĕç вăйĕ тăратмала.

Р. Йемельйанăв.

Строительствăна ĕçлеме кайаççĕ

ИШЛЕЙ. Ишек йалсоветĕнчи колхозниксен Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строительствинче ĕçлес хастарлăхĕ ӳссех пырать. Октяберĕн 10-мĕш хыççăн ку йалсоветран пĕтĕмпе 60 колхозник ĕçлет (вăл шутран 15 çын лашапа). Строительствăра ĕçлекенсем пур ĕçре те паха примерсем кăтартаççĕ. Акă Роман Йегорăв, Кирилл Йакăвлĕв йулташсем куллен 3—4 кубла метр çĕр чавса плана ытлашшипех тултараççĕ.

Арк. Наумăв.

* * *

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Ваçкасырминчи „Çĕнĕ пурнăç“ колхозран строительствăра 10 çын çуран, 5 çын лашапа ĕçлеççĕ. Вĕсем колхоза панă плана тултармасăр та киле таврăнмаççĕ. Колхозниксем чукунçул çинче савăнсах ĕçлеççĕ.

П. О.

Чукунçул станцинчи столовăй

ТРАК. Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул станцинче ку таранччен столовăй уйрăм çуртра пулман. Столовăй çуртне фанерсем тăратса кăна тукаланăччĕ. Çăмăр çусан çăмăр кĕретчĕ, çил чухне тусан кĕрсе тулатчĕ. Тата тĕрлĕрен апат-çимĕç пĕçерме кăмакасем те çитместчĕç.

Çаксене шута илсе халĕ станцинче çĕнĕ столовăй турĕç. Столовăйа апатланма рабочисем кăна мар, станцинчи служащисем тата колхозниксем те нумай пыраççĕ. Унта заказ парса уйрăм апат пĕçерттерме те пулать.

Ф. Гаврилăв.

Перепиç умĕн

Çитменлĕхсене сирмеле

Елĕк районĕнче Пĕтĕм Сойузри халăх перепиçне хатĕрленсе счетчиксем 90 çын, инструктăр-контрольорсем 22 çын уйăрнă. Перепиçре ĕçлеме уйăрнă çынсене кашнине уйрăммăн райĕçтăвком президиумĕнче çирĕплетнĕ. Вĕсем пултарулă тата хут лайăх пĕлекен çынсем.

Районри халăх перепиçне иртермели комиççи председателĕ Куликов йулташ—Чăваш АССР Верховнăй совечĕн депутачĕ, халĕ вăл райплан председателĕнче ĕçлет. Перепиçре ĕçлеме уйăрнă аслă инспектăр Мешков йулташ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ вăхăтĕнче Тукташ суйлав участкинче участкăри суйлав комиççи председателĕ пулса ĕçленĕ.

Пĕтĕм Сойузри халăх перепиçне хатĕрленсе иртерме план тунă. Вăл план тăрăх, йалсовет председателĕсемпе çекретарĕсен çеминарне иртернĕ. Çеминарта 55 çын пулнă.

Районра, Хирлеп-Пуç йалсовечĕсĕр пуçне, пур йалсоветсенче те пулăшу комиççисем организациленĕ. Йулăш йалсоветĕнче кашни йалтах йалсовет членĕсем халăха перепиç çинчен каласа ăнлантараççĕ.

Анчах халăх перепиçне иртерме хатĕрленес ĕçре районра пысăк чăрмавсем те пулса пыраççĕ-ха. Сăмахран, Елĕкре вăтам шкулти 25 учительрен пĕрне те перепиçре ĕçлеме уйăрман. Çакăн пекех Шĕмшевĕшри вăтам шкулри 18 учительрен 1 учительне çеç уйăрнă. Перепиçе кăтартулăн иртерес тĕлĕшпе район нихăш районпа та ăмăртăва тухманха. Вулав çурчĕсемпе район центрĕнчи клуб çумĕнче перепиç кĕтессине организацилемен.

В. Йефремăв.

Химилĕ ăмăртусем

Нойаберĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа 30-мĕшне çитиччен Сойузри Осоавиахимăн Тĕп Совечĕ комсомол 20 çул тултарнă май Пĕтĕм Сойузри химилĕ ăмăртусем туса иртерет. Ăмăртăва районсенчи химилĕ ăмăртусенче малти вырăнсене тухнă, 1938 çулти нойаберĕн 1-мĕш тĕлне 1-мĕш тата 2-мĕш сыпăклă ПВХО значкисĕсене хатĕрлессин çулталăкри заданине тултарнă тата Осоавиахимăн облăçри совечĕсем Пĕтĕм Сойузри химилĕ ăмăртусене кандидата тăратнă пуçламĕш организацисем хутшăнаççĕ.

Осоавиахимăн Шупашкар хула совечĕ ку ăмăртăва хутшăнма йышăннă. Çак кунсенче хулари 15 пуçламĕш организацисенче (Пединститут, Госбанк, Кооптехникум тата ыт.) химилĕ ăмăртусене хутшăнма тивĕç паракан нормăсене пурнăçа кĕртме пуçланă.

Осоавиахим хула совечĕ 8 çынран судйасен коллегине çирĕплетнĕ. Аслă судйа—коммунисла йалхуçалăх аслă шкулĕнчи çар ĕçĕн преподавателĕ Ижейĕв йулташ.

9 уйлă пусуçаврăнăшĕ çине куçаççĕ

Кăпăсри (Тутаркас р.) „КИМ“ колхоз членĕсен пухăвĕ колхозра миçе уйлă пусу çаврăнăшĕ кирли çинчен тĕплĕн сӳтсе-йаврĕ. „КиМ“ колхоз 1933 çултанпа ку вăхăтченех 5 уйлă пусуçаврăнăшĕпе ĕçлесе пурăннă. Анчах, 5 уйлă пусуçаврăнăшĕ вăйлă тырпул туса илес, выльăх-чĕрлĕхсем валли çителĕклĕ апат тăвас ĕçре пысăккăн чăрмантарнă. Тĕрлĕрен культурăсем черетленсе акăнса пыма пултарайман. Пĕр уйрах темиçе çул хушши пĕр тĕрлĕ культура акăнса пынă. Çавна май, тырпул тухăçлăхĕ начар пулнă. Акă, 4-мĕш уйра икĕ çул хушши, 5-мĕш уйĕн çур уйĕнче виçĕ çул хушши çуртрисем акăнса пынă. Нумай çул хушши ӳсекен куракçем пачах та акăнман. Çавна пула та ĕнтĕ выльăхсем валли кирлĕ таран апат хатĕрлеме пултарайман епĕр.

Пилĕк уйлă пусуçаврăнăшĕнче уйсем черетленсе канса пыраймаn. Çуркунне утăлăх виккă акса хăварсан, ăна вара кĕркунне çулса илеççĕ те ыраш акса хăвараççĕ. Çапла ĕçленипе тырпул тухăçлăхĕ 15 процент таран чакнă.

Çĕрĕç органĕсенче ларнă халăх тăшманĕсем колхозсенчи пусуçаврăнăшĕсене йури пăтраштарса пынă. Вĕсем пирĕн колхоза та пысăк сийен кӳнĕ.

Колхозниксен пухăвĕ 5 уйлă пусуçаврăнăшĕпе малала ĕçлеме май çук, терĕ. Уйрăм колхозниксем çак пусуçаврăнăшĕн çитменлĕхĕсем çинчен чарăнса тăчĕç. Кунпа пĕрлех колхоза миçе уйлă пусуçаврăнăшĕ кирли çинчен тĕплĕн сӳтсе-йаврĕç. Пуху „КИМ“ колхоза 9 уйлă пусуçаврăнăшĕ кирлĕ терĕ. Çакăн хыççăн вара колхозниксем 9 уйлă пусуçаврăнăшĕ çине куçма йышăнса хăварчĕç. Çак чи лайăх пусуçаврăнăшĕ пулса тăрать. Кунта тĕрлĕрен культурăсем черетленсе акăнса пыраççĕ, выльăхсем валли çителĕклĕ таран апат туса илме пулать.

С. Ф. Савелйĕв.

Китайри вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни

(Октяберĕн 4-мĕшĕнчен 14-мĕшне çитиччен)

Йапони командованийĕ, Центр Китайри Йанцзы йуханшывĕ патĕнчи вырăнта вăрçă ĕçĕсем пуçласа, Китайăн пысăк центрне—Ханькоу хулине хăвăрт туртса илмели анлă план тунă пулнă. Малтанхи вăхăтра Ханькоуна йуханшыв тăрăх наступлени туса туртса илме шутланă пулнă, ку ĕçре вĕсене çар флочĕ пулăшмала пулнă. Анчах ун пек тума май çукки паларнă. Ханькоуна кăнтăрпа çурçĕр йенчен хесĕрлесе туртса илме туса хатĕрленĕ план та çавăн пекех ишĕлсе пырать. Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр йенчи çыранĕ çинче Китай çарĕсем пысăк çĕнтерӳсем туни йапонĕцсем шутласа хунă пĕтĕм плансене çĕмĕрет.

Цзӳцзйан хулинчен кăнтăр йеннерех, Махулин станци районĕнче, Йапони çарĕсем икĕ ерне хушши ĕнтĕ Китай çарĕсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тухаймаççĕ. Çакна пула ĕнтĕ хăйсен планĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре йапонĕцсемшĕн пысăк чăрмав тухса тăнă, вăл план тăрăх Йапони çарĕсем Ханькоуран кăнтăр йенче Кантон—Ханькоу чукунçулĕ çине тухмала пулнă, çапла вара Ханькоупа Кантон порчĕ хушшинчи çыхăнăва татмала пулнă. Махулин станци районĕнчи китайĕцсен вăйне çĕмĕрес тесе, Йапони çарĕсем Китай çарĕсен тылне çавăрнса пырса кĕрес шутпа çапăçусем пуçланă. Çак ĕçе тума Деаньран çурçĕр-хĕвеланăç йеннерех Йапони салтакĕсене 20 пин çын ытла илсе пынă пулнă. Анчах Йапони çарĕсем умма лартнă задачăна пурнăçа кĕртеймен кăна мар, тата октяберĕн 9-мĕшĕнче вĕсене пĕтĕмĕшпех арккатса тăкнă. Китай çарĕсем йапонĕцсене тусем хушшинеле илĕртсе илсе кĕнĕ, вара, пур йенчен те хупăрласа илсе, Йапонин икĕ дивизине пĕтĕмĕшпе пекех пĕтернĕ. Унтан çав участкăра Китай çарĕсем контрнаступлени пуçланă, вара, йапонĕцсене кайала хуса йарса, октяберĕн 12-мĕшĕнче Махулин станцине хăйсен аллине илнĕ. Китай çарĕсен çак çĕнтерĕвĕ—вăрçă пуçланнăранпа тунă чи пысăк çĕнтерӳсенчен пĕри.

Йапони командованийĕ темиçе уйăх хушши ĕнтĕ Кăнтăр Китайра пысăк десант антарса хăварма хатĕрленнĕ; унта йапонĕцсем Кантон—Коулун чукунçулĕ (вăл чукунçул тăрăх урăх çĕршывсенчен хĕçпăшалсем кӳрсе пыма пит лайăх) çинчи çыхăнăва татасшăн. Анчах, Китайăн кăнтăр пайĕнче Англи интересĕсем пысăк пулнине шута илсе, йапонĕцсем вăл плана пурнăçа кĕртме тытăнмасăр тăнă. Анчах, йулашки вăхăтра Иевропăра Англи правительстви агрессăра уступкăсем панине кура тата Англи хирĕç тăрассинчен хăрама пăрахса, Йапони империалисĕсем, Центр Китайра хăйсене хытă çапа-çапа хуçнă хыççăн, хăйсен кăнтăр Китайри планĕсене пурнăçа кĕртме васкавлăн пикенчĕç. Биас заливĕнче (Гонконгран çурçĕр-хĕвелтухăç йенче) вĕсем десант илсе пырса антарчĕç. Октяберĕн 12-мĕшĕнче йапонĕцсем унта артиллери чăçĕсем тата вăрçă хатĕрĕсем илсе пынă. Октяберĕн 13-мĕшĕнче йапонĕцсем унта çĕнĕ десант илсе пынă, анчах вĕсене вăл десанта антараса хăварма паман.

Кăнтăр Китайри халăхăн тăшмана хирĕç кĕрешес кăмăлĕ калама çук пысăк, вăл кĕрешĕве хатĕр тăрать. Китай çарĕ йапонĕцсене хирĕç вăйлăн кĕрешет, йапонĕцсен унта та, ытти районсенчи пекех, вăйлăн çапăçакан Китай вăйĕсем çине пырса тăрăнмала пулать.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Октяберĕн 11-мĕшĕнче Хĕвелтухăç фронтĕнче Кольдель Косо районĕнче пăлхавçăсем республиканĕцсен позицийĕсем çине атакăсем тунă. Республиканĕцсем вăл атакăсене пĕтĕмĕшпех çĕмĕрнĕ.

Республика артиллерийĕ пăлхавçăсен çурран çарĕн икĕ отрйачĕ çине персе вĕсене чылайах сийен кӳнĕ.

Центрти фронтра, Мадрид патĕнчен çурçĕр-хĕвеланăç йенчи сăртлă позицисем çинче республиканĕцсен чăçĕсем Гвадаррамă йалĕсем патĕнчен çурçĕр йеннеле 500 метр ытла малала куçнă.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

(ТАСС).

Ăмăртăва сарса пымаççĕ

КУСЛАВККА. (Телефон тăрăх). Çуртйĕр пайĕсем туса кăларакан комбинатри рабочисемпе работницăсем Октяберти Социалисăмлă револьуци 21 çул тултаракан уйава ĕçре çĕнĕ, паха çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Рабочисен хастарлăхĕ хальхи вăхăтра уйрăмăнах ӳсрĕ. Акă каскалакан цехри В. Илйин йулташ йертсе пыракан сменă октябер уйăхĕн малтанхи 10 кунĕнче плана 102 процент тултарнă, халĕ 119,6 процент тултарса ĕçлет. Уйрăм стахановĕцсем татах лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Хаванский йулташ кашни кунах нормăна 196 процент тултарать, Петуховă, Мйаçниковă йултašсем те 125—175 процентшар тултарса пыраççĕ.

Анчах ăмăрту пур цехра та кирлĕ пек саралса пымасть. Чылай сменăсем кулленхи плана та пурнăçа кĕртеймеççĕ. Акă каскалакан цех Октябер уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса плана 105 процентран кайа мар тултарса ĕçлеме обйазательствă илнĕ. Анчах цех октяберĕн 1-мĕшпе 11-мĕш хушшинчĕ плана пĕтĕмпе те 69,3 процент çеç тултарнă. Чернов, Мурзаков мастăрсен сменисем 61,6—53,6 процент çеç тултарса ĕçлеççĕ. Çапла ĕçленипе те ĕнтĕ комбинат плана тултарса пыраймасть.

Комбинатра ăмăрту йапăх саралса пынине обйективлă сăлтавсем çине йăвантарма çук. Айăпĕ пĕтĕмпех партипе профсойуз тата дирекци çине лекет. Вĕсем ăмăртăва сарса, вăйлатса пырассипе пайанхи куна та кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Уйрăм стахановĕцсен лайăх примерĕсене ытти рабочисем хушшине сарассипе те конкретлă ĕçлени, йертсе пыни курăнмасть.

Мранька.

Смоленскра халăха ӳсттарнă кăларас ĕçри работниксен квалификацине ӳстермели институт çумĕнче августăн 22-мĕшĕнче пионервожатăйсен облăçри шкулĕ ĕçлеме пуçланă. Шкулта 70 комсомолĕц вĕренет, шкул вăтам тата туллимар вăтам шкулсем валли пионервожатăйсем хатĕрлет. Вĕренмели срук—4 уйăх.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Пионервожатăйсен шкулĕнче урокра. Малта—Н. Судейкин тата А. Балакарĕвă.

И. Баранăв фото ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

„Тетте кĕнекесем“

Чăвашсен государствă издательстви йулашки вăхăтсенче кĕçĕн çулхи ачасене валли кĕнекесем кăларас тĕлĕшпе чылай пысăк ӳсĕмсем туса пырать. „Кĕнеке хыççăн кĕнеке“ текен çерипе вăл Толстой, Пушкин, Ромен Роллан, Короленко, Джек Лондăн, Сетон-Томпсон т. ыт. вырăс писателĕсемпе Хĕвеланăç Йевропăри писательсен калавĕсене кăларнă. Çав çерирех хăшпĕр чăваш писателĕсен произведенийĕсем те тухнă.

Халь тата Чăвашиздат чи пĕчĕк ачасене валли „Тетте кĕнеке“ йатлă çери кăларма тытăннă. Ку çерире çак кунсенче 10 кĕнеке кăларнă: Л. Толстой—„Виçĕ упа“, Л. Квитко—„Хăнана“ „Ворошилăва çыру“, „Кăс-кăс“, Н. Забила „Йаççă сачĕ“, А. Барто — „Теттесем“, „Йĕре хĕрача“, К. Чуковский „Чăх чĕппи“, „Кушак пӳрчĕ“ тата „Йумахсем“.

Кĕнекесене тирпейлĕ, виçĕ тĕслĕ сăрпа тунă ӳкерчĕксемпе илемлетсе кăларнă. Чăвашиздат хăйĕн кĕнекисенче йалан тăвакан „çылăх“ та—корректурăлă йăнăшсем те—çук. Кĕнекесен чĕлхи аван, çăмăл, ачасемшĕн ăнланмала. Куçаракансем те, редактăрсем те тăрăшса, ĕçе тĕплĕн тăвас тесе ĕçлени курăнать.

Пĕр сăмахпа, Чăвашиздат ырлама тивĕçлĕ пит те кирлĕ ĕç тунă, кĕçĕн çулхи ачасем валли Октябер уйавĕ умĕн аван парне хатĕрленĕ. Анчах кĕнекесен хакĕ пысăкрах.

Л. Агакăв.

Районри хаçатсем тăрăх

** Липăвкăри (Турхан р.) Ленин йачĕпе тăракан савăт дирекцийĕ кăçал савăтри стахановĕцсене канмали çуртсене кайма 17 путовкă, Совет Сойузĕн хулисем тăрăх екскурçине кайма икĕ путовкă илсе панă. („Коммунар“).

** Çĕнĕ Мамири (Шăхасан р.) Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз çумĕнче промертел организациленĕ. Промертелте 35 çын ĕçлеççĕ. Ертел тĕкĕрсем, атă-пушмаксем тата çăматăсем тăвать. („Вăйлă тырпулшăн“).

** Пăрачкав районĕнче нумай ачалă амăшсене пурĕ 736 пин тенкĕ пособи панă, вăл шутран 4 çемйе 10-шар пин тенкĕ, икĕ çемйе 11-шер пин тенкĕ илнĕ. („За большевистские темпы“).

** Кувакинăра çитĕннисем валли каçхи вăтам шкул уçнă. Унта 32 çын вĕренет. Кладбишчăра та çавăн пек шкул уçнă. („Колхозная правда“).

КĔСКЕН

** Кăташри (Йетĕрне р.) „Пионер“ колхоз кăçал патшалăха 12 пин литр сĕт сутса автомашина туйанна.

А. Пономарев.

** Патăрйелĕнчи колхоз шкулĕнче çак кунсенче хĕрлĕ кĕтес организациленĕ. Вĕренекенсем кашни переменăра унта хаçат-журналсем вулаççĕ, шахмăтла, доминола выляççĕ.

Н. Квасăв.

** Октяберĕн 14—15 кунĕсенче Çĕрпӳ хулинче кĕркуннехи йармăркă пулса иртнĕ. Йармăркăна район колхозсем тата промысла ертелĕсем хăйсен таварĕсемпе тухнă.

Р. Х.

** Шăхасан районĕн центрĕнче—Шăхасанта çитĕннисен вăтам шкулне уçнă. Октяберĕн 14-мĕшĕнче унта вĕренме пуçланă.

Пуринчен малтан

Осоавиахим членĕсен билечĕсене улăштарас ĕçре Куславкка районĕ республикăра пĕрремĕш вырăнта тăрать. Осоавиахим билечĕсене кунта пуринчен малтан улăштарса çитернĕ.

Билетсене улăштарнă вăхăтра районĕпе Осоавиахим членĕсен хисепне çĕнĕрен 400 çын ытла хутшăннă, тăвата вырăнта çĕнĕрен пуçламĕш организацисем тунă, тактикăлă вĕренӳсем иртернĕ.

Пĕр колхозра виçĕ автомашинă

Шăнкăртам районĕнчи „Майак“ колхоз кăçал патшалăха сĕт-çӳ тата аш-какай парса икĕ автомашинă илчĕ. „Майак“ колхозăн пурĕ виçĕ автомашинă.

А. Кужикăв.

Пулни-иртнисем

** Çак кунсенче Шупашкарти милици тытăмĕ В. Н. Березкина арĕсленĕ. Березкин нумай вăхăт хушши ниçта ĕçлемесĕр вăрă ĕçĕпе пурăннă. Çентяберĕн 1-мĕшĕнче вăл Ленинскайа урамра 3-мĕш номĕрлĕ çуртра пурăнакан Соловйов хватерĕнчен пальто вăрласа тухнă.

** И. Захарăв Шупашкар хулинчи строительствăра уйăх çурă хушши столовăй пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ. Çак кĕске вăхăтра вăл, йаланах ĕçсе çӳресе, 4510 тенкĕ растратă тунă. Хăйĕн айăпне вăл пĕтĕмпех йышăннă. Растрачике суда панă.

Шахмăт турнирĕ

Шупашкарти кооперации техникумĕнче шахмăт турнирĕ пулса иртрĕ. Турнирта малти вырăна тухассишĕн 14 студент выльарĕç.

Турнир пулса иртнĕ хыççăн малти вырăна 3-мĕш курсра вĕренекен М. Мешков, иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Логинăвпа Йегорăв тухрĕç.

Шахмăт турнирĕ малала тăсăлать. Унта студентсемпе преподавательсем 16 çын хутшăннă.

В. Куçмин.

„Паллă хулиган“

Степанăвпа Ларионăв йулташсем „Чăваш Коммунĕ“ хаçат редакцине Елĕк районĕнчи Татмăш йалçынни Иван Сорокин хулиганла ĕçсем туса çӳрени çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Çакăн тăрăх Елĕк районĕнчи милици тытăмĕ тĕрĕслесе тухса, ĕçе суд аллине панă.

Хальхи вăхăтра И. Сорокина суд туса айăпланă.

Ответлă редактăр заместителĕ **В. Й. ЙАКĂВЛĔВ.**

Колхоз работникĕсен квалификацине ӳстермели шкула

бухгалтĕр тата **машинисткă кирлĕ.**

ДИРЕКЦИ.

Чăваш АССР
Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн
Племзаготкантурне
йалан ĕçлеме
АСЛĂ БУХГАЛТĔР
кирлĕ.

Ĕç укçи килĕшӳ тăрăх.
Çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле:
Г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, № 7,
Чувашплемзаготконтора НКЗ ЧАССР. Телефон № 7—71.

2—1

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав
Халăх Комиссариачĕн Снабжени
кантурне
бухгалтĕр кирлĕ.

Администраци.

2—2

„ЧĂВАШ КОММУНĔ“ ÇЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ: ПĔР УЙĂХА 2 т. 50 пус. 3 УЙĂХА 7 т. 50 п., 6 УЙĂХА 15 т., ÇУЛТАЛĂКА 30 тенкĕ. ПОДПИСКĂНА ÇЫХĂНУ УЙРĂМĔСЕМ, ПИÇМОНОÇЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 537. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793 ф. 6. 58 × 84 п. л